24-меш çул тухать. Хакё 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
28
ЫТЛАРИКУН
22 (5737) №

Пётём тёнчери пролетарисем, пёрлешёр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМЁПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧЁН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧЁН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧЁН ХАҪАЧЁ.

ПРОМЫШЛЕННОҪА ЕРТСЕ ПЫРАССИНЕ—ҪЎЛЛЁ ПУСĂМА

Чăваш республикинчи промышленноҫлă предприятисен чылайĕшĕн 1940 çулти ĕçĕсем çителĕксĕр пулчĕç. Производство программине тултарман предприятисен шутне Вăрнарти фосфорит завочĕ, Буинскри сланец рудникĕ, Етĕрнери, Шупашкарти, Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕсем, кирпĕч завочĕсем, макарон фабрики тата ытти чылай предприятисем кĕреççĕ. Çак асăннă предприятисем производство программине иртнĕ çулта 49,2—67,3 процент кăна тултарнă. Продукци пахалăхне илсен, ĕçсем татах та начартарах. Предприятисем продукци пахалăхне ӳстерес, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетес, ĕç тухăçлăхне ӳстерес задачăсене кирлĕ пек пурнăçлаймарĕç.

Предприяти руководителĕсем СССР Верховный Совет Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсене халĕ те çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çакăн пирки ĕнтĕ чылай предприятисенче ĕç дисциплини çителĕксĕр, простойсем нумай, браксем пысăк, продукцин хăйне ларакан хакĕ пысăк.

Парти райкомĕсене промышленноҫа ертсе пырас ĕçе лайăхлатма ВКП(б) Обкомĕ пĕрре кăна мар кăтартса панă. Парти обкомĕ хăйĕн решенийĕсенче парти райкомĕсем ВКП(б) XVIII съезчĕн тата ВКП(б) Центральный Комитечĕн кăтартăвĕсене çителĕксĕр пурнăçланине палăртнă. Анчах та парти райкомĕсемпе пуçламĕш организацисем чылайĕшĕ ВКП(б) Обкомĕ панă кăтартусене çине тăрса пурнăçласа пымаççĕ-ха. Çавăнпа та промышленность предприятисем, уйрăмăнах вырăнти промышленность тата алăста артелĕсем çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ.

ВКП(б) райкомĕсем промышленность ĕçĕсемшĕн ответлăх сахал туйăнă пирки, чылай предприятисенче партиллĕ-политикăллă ĕç çителĕксĕр тăрать, ăна хуçалăхлă задачăсемпе çыхăнтарса пымаççĕ. Предприятисен ĕçне лайăхлатмалли пысăк майпа—администраци ĕçне контроль тумалли правăпа чылай парторганизацисем тивĕçлипе усă курмаççĕ. ВКП(б) райкомĕсем, пуçламĕш парторганизацисем предприятисенче единоначалие çирĕплетес тĕлĕшпе те сахал ĕçлеççĕ. Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем единоначали принципне пăсма хăтланнине ВКП(б) райкомĕсем çийăнчех сирсе пымаççĕ.

Промышленность предприятисен иртнĕ çулти ĕçĕсен йăнăшĕсене шута илес пулать, парти организацисен промышленноҫа ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатмалла. СССР Верховный Совет Президиумĕ иртнĕ çулти июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăрассине большевикла организацилемелле. Кашни парторганизацин задачи—предприятисенче ĕç дисциплинине çирĕплетесси пулать, прогулсене тата ĕçрен харпăрăй ирĕкĕпе тухса каяссине пачах пĕтермелле. Пирĕн предприятисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеччĕр, ĕç кунĕнчи 480 минутпа тулли усă курччăр, продукци пахалăхĕ куллен-кун лайăхланса пытăр тесен, парторганизацисен пĕтĕм производство ĕçĕшĕн директортан кая мар ответ тытмалла. Предприятисен пĕтĕм ĕçне пĕлсе тăрса ертсе пымалла, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме коллектива мобилизацилемелле.

Производство программине тултарассишĕн кĕрешнĕ чухне парторганизацисен браксене пĕтересшине, продукци пахалăхне лайăхлатассине, чĕртаварпа перекетлĕ усă курассине пысăк вырăна хумалла. Çавăнпа та производствăллă контроле вăйлатмалла, технологи дисциплинине çирĕп тытса пымалла, юрăхсăр продукци туса кăлараканскене хирĕç кĕрешмелле. Шупашкарти кирпĕч завочĕ пек чи начар сортлă кирпĕч, «Кожупряжь» артелĕ пек пĕрер эрнере çĕтĕлекен атă-пушмак туса кăларнине тӳсме юрамасть. Брак туса кăларнă кашни факта парти организацисенче сӳтсе-явмалла, унăн сăлтавне тупмалла, айăплисене ответ тыттармалла. Парти организацисен производствăри «пĕчĕк» çитменлĕхсене те курмасăр юлмалла мар.

Ĕçе организацилессине, рабочисен ĕç вырăнне, технологи процесне лайăхлатса çĕнетсе пырас ĕçе инженерсемпе техниксене, стахановецсене активлăн хутшăнтармалла. Анчах та халĕ пуçламĕш парторганизацисем те, çавăн пекех ВКП(б) райкомĕсем те производство ĕçне лайăхлатас ыйтупа инженерсемпе техниксене, стахановецсене пухса сахал калаçаççĕ, сахал канашлаççĕ.

Администрацисен ĕçне парторганизацисем енчен контроль туни производство ĕçне лайăхлатма, парторганизацин тата кашни коммунистăн ответлăхне ӳстерме пулăшмалла. Анчах та çак ĕçе хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем тĕрĕс туса пымаççĕ. Коммунистсен пухăвĕсенче директори ĕçĕсем çинчен отчет итлеççĕ те производствăри çитменлĕхсемшĕн пĕтĕм айăпа хозяйственниксем çине тиеççĕ, анчах парторганизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене туписа палăртмаççĕ. Вăл кăна та мар, чылай чухне парторганизацисен пухăвĕсенче хуçалăхлă ыйтусене сӳтсе-явăççĕ производствăллă канашлусенче. Çапла туни çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшать, рабочисен хастарлăхне татах та ӳстерет.

— Эпир йĕркеллĕ ĕçлени рабочисен ĕç вырăнне тĕрĕс организацилененчен килет,—тет Щукин юлташ.—Кашни рабочине уйрăм аггрегат çумне çирĕплетнĕ, çавăншăн вăл ответ тытать. Пĕрне-пĕри кансĕрлемеççĕ тата машинăсем патĕнче ĕçлекенсем пурте хăйсен обязанноҫĕсене лайăх пĕлеççĕ.

Январь уйăхĕнче выпарщицăсем Шариковăпа Кровякова юлташсем, диффузорщиксенчен Никифоровпа Сулимов юлташсем малта пыраççĕ. Вăтамран илсен, кашни кунах вĕсем нормăна 118—130 процент тултараççĕ.

Ăна çакă та лайăх кăтартса парать: цех коллективĕ январь уйăхĕн малтанхи 20 кунхи плана 119 процент тултарнă.

Рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организациленĕ. Агитаторсем час-часах калаçусем туса иртереççĕ, хаçатсем çинчи статьясене вуласа параççĕ. Цех начальникĕ коммунист Щукин юлташ та агитатор, массăллă ăнлантару ĕçне тивĕçлĕн тăвать. Вăлах производствăллă канашлусем иртерет. Паян бригадăсем, уйрăм рабочисем мĕнле ĕçлерĕç? Мĕнле çитменлĕхсем пулнă, кам айăпĕпе? Çаксем çинчен сӳтсе-явăççĕ производствăллă канашлусенче. Çапла туни çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшать, рабочисен хастарлăхне татах та ӳстерет.

Январь уйăхĕнче выпарщицăсем Шариковăпа Кровякова юлташсем, диффузорщиксенчен Никифоровпа Сулимов юлташсем малта пыраççĕ. Вăтамран илсен, кашни кунах вĕсем нормăна 118—130 процент тултараççĕ.

Хар. ЛИСИН.

Обязательствăна ытлашшипех пурнăçлатпăр

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). «Большевик» заводри скумпи цехĕ плана тултарас тĕлĕшпе малта пырать. Цех коллективĕ кашни уйăхра, кварталта плана ирттерсе тултаратъ. Планран ирттерсе продукци туса кăларасси рабочисен йăлине кĕнĕ.

— Епле-ха вара нормăна çеç тултармалла? Мĕншĕн-ха эпир квалификаци илнĕ. Нормăна тултарасси вăл кашни рабочин обязанноҫĕ. Пирĕн ĕнтĕ государство панă задание яланах пысăк пахалăхпа, ирттерсе тултармалла, — теççĕ цехри стахановецсем.

Производствăра ĕç дисциплини çирĕп. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ иртнĕ çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указ хыççăн прогул тăвакансем е ĕçе кая юлса тухакансем пĕрре те пулман. Кашни рабочи хăйне панă заданине ăнăçлăн пурнăçлать, вĕсенчен çурри ытла стахановецсем.

Çакă ĕнтĕ цеха çитĕнӳсем туса пыма пулăшать. Скумпи цехĕ 1940 çулти плана ноябрĕн 7-мĕшне тултарнă, планран ирттерсе темиçе тонна тоннида туса кăларнă.

Хальхи вăхăтра рабочисем ăмăртăва татах та анлăн сарса пыраççĕ. Вĕсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци тĕлне квартал планне 70 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешеççĕ. Паллах, цеха çителĕклĕ таран энергети чĕртăвар парса тăрсан, вĕсем хăйсен сăмахне тивĕçлĕн пурнăçлаççĕ.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен

1. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «СССР Государство Контролĕн Халăх Комиссариатне тăвасси çинчен» 1940 çулти сентябрĕн 6-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, государствăн укçа-тенкĕ средствисемпе материаллă хаклăхĕсене учета илнине тата расходланине çирĕпрен те çирĕп контроль туса тăрас тата правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăрас шутпа, РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссариатне тăвас.

2. РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссариачĕ Союзлă Республикăллă Халăх Комиссариачĕ пулса тăрать тата вăл çак ĕçсене пурнăçа кĕртсе пырать:

а) государствăллă, кооперативлă тата ытти обществăллă организацисен, учрежденисен тата предприятисен аллинче тăракан государствăн укçа-тенкĕ средствисемпе материаллă хаклăхĕсене учета илнине тата расходланине контроллет;

б) правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăрать.

3. РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссариачĕ çине çакăн пек ĕçсем хурас:

а) государствăн пĕрремĕш статьяра кăтартнă средствисемпе материаллă хаклăхĕсене учета илнине, сыхласа усранине тата расходланине кунсерен—малтанлăха та, çавăн пекех кайран та контроль туса тăрасси;

б) РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссарĕ кăтартса панисем тăрăх государствăллă ревизисем тăвасси;

в) РСФСР правительствин тата РСФСР правительствин постановленийĕсемпе решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăрасси.

4. РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссариатне çавăн пек право парас:

а) РСФС Республикинчи мĕнпур наркоматсемшĕн, главнăй управленисемшĕн РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитетсемшĕн тата вĕсен вырăнсенчи органĕсемшĕн, çавăн пекех тата РСФСР Республикинчи ытти мĕнпур государствăллă, кооперативлă тата урăх обществăллă предприятисемшĕн, учрежденисемшĕн тата организацисемшĕн обязательнăй шутланакан кăтартусем — государство контролĕн компетенцине кĕрекен ыйтусем тăрăх вĕсем отчетсем, объясненисем, сведенисем тата ытти материалсем тăратасси çинчен кăтартусем пама;

б) контроль тата ревизи тунă вăхăтра государство средствисемпе материаллă хаклăхсене учета илес, сыхласа усрас тата расходлас ĕçре тупса палăртнă мĕнпур ситменлĕхсем çинчен, çавăн пекех тата правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртмен фактсем çинчен ревизи тăвакан учрежденин, организацин тата предприятин тивĕçлĕ руководителĕсене пĕлтерме тата вĕсемшĕн обязательнăй шутланакан кăтартусем пама;

в) правительство решенийĕсене пурнăçламан пирки, çавăн пекех материаллă хаклăхсемпе укçа-тенкĕ хаклăхсене учета илес ĕçе юхăнтарса янă тата вĕсене хуçасăрла расходланă пирки айăпа кĕнĕ çынсем çине, вĕсене ĕçрен сирсе ярасси таринех, дисциплинарлă взысканисем хума;

г) усал ĕçсем е ытти преступлениллĕ ĕçсем тунине тупса палăртсан, айăплă çынсене законпа çирĕплетсе панă йĕркепе тăрăх суд урлă ответ тыттарма;

д) контроль е ревизи тунă чухне должноҫлă çынсем енчен тĕрĕс мар ĕçсем тунине тупса палăртсан, çирĕплетсе панă правилăсем тăрăх çав айăплă çынсенчен укçа шыраса илме.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ А. БАДАЕВ.
РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУРОВ.

Мускав, 1941 çулти январĕн 25-мĕш.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

А. А. Пекшев юлташа РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартасси çинчен

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместительне Александр Алексеевич **Пекшев** юлташа РСФСР Государство Контролĕн Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме лартас.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ А. БАДАЕВ.
РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУРОВ.

Мускав, 1941 çулти январĕн 25-мĕш.

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

Суйлав умĕнхи пухусем

ВĂРМАР, январĕн 27-мĕш. (**Телефонпа**). Январĕн 26-мĕшĕнче Вăрмар округĕнче суйлав умĕнхи пуху пулса иртрĕ. Пухăва Куславкка, Вăрмар районĕсенчи тата суйлав округне кĕрекен Тăвай, Октябрьский районсенчи колхозсемпе учрежденисен тата предприятисен представителĕсем 300 çын ытла пынă.

Пухăва Куславкка комбиначĕн представителĕ К. П. Шиликова юлташ уçать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Белолипецкий юлташ çинчен пысăк хаваслăхпа калать.

— Халĕ, — тет Шиликова юлташ,— пирĕн комбинат коллективĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлас куна тата суйлав кунне производствăллă çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет.

Вăрмар районĕнчи «Арабось» колхоз членĕсен представителĕ М. Алексеев юлташ сăмах илет. Вăл çапла калать:

— Эпир колхозниксен пухăвĕнче СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама Белолипецкий юлташăн кандидатурине тăратрăмăр. Вăл халăх ĕçĕшĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлекен çын, эпир Белолипецкий юлташ Ленин—Сталин сăнарлă депутат пуласса шанса тăратпăр.

— Пирĕн спортинвентарь фабрикин коллективĕ,—тет Николаев юлташ. — февралĕн 16-мĕшĕнче суйлав участокне пĕр çын пек пулса каять, суйлавçăсем хăйсен сасĕсене Белолипецкий юлташ кандидатуришĕн параççĕ.

Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз членĕсен представителĕ Иванов юлташ Белолипецкий юлташ халăх шанăсне тӳрре кăларасси çинчен калать.

Тăвай районĕнчен килнĕ представитель Христофоров, Вăрмар райком секретарĕ Бойков юлташсем февралĕн 16-мĕшĕнче Белолипецкий юлташăн сасăлама чĕнчĕç.

Пухура Белолипецкий юлташ пулчĕ, хăйĕн биографипе паллаштарчĕ, ĕçсыннисене ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăллă çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме чĕнчĕ.

Юлашкинчен пуху участоксенче доверенăйсем пулса ĕçлеме 98 çын уйăрчĕ, округри суйлавçăсем патне Белолипецкий юлташăн сасăлама чĕнӳ ячĕ.

ЕТĔРНЕ, январĕн 27-мĕш. (**Телефонпа**). Январĕн 26-мĕшĕнче Етĕрне хулинче суйлав умĕнхи пуху пулса иртрĕ. Пухăва Хĕрлĕ Чутай, Советский, Элĕк, Етĕрне районĕсенчен 300 çынна яхăн пухăннă.

Чи малтанах спиртзавод инженерĕ Коперсак юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Эпир, — тет вăл — 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн Яков Кузьмич Павлов юлташăн кандидатурине тăратрăмăр. Эпĕ заводри рабочисен, служащисен тата инженерно-технически работниксен ячĕпе мĕнпур суйлавçăсене суйлав кунĕнче — февралĕн 16-мĕшĕнче Павлов юлташăн сасăлама чĕнетĕп.

Коперсак юлташ спиртзавод суйлав кунне производствăллă пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленни çинчен каласа пачĕ. Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ К. Якимова юлташ бригади куллен хи нормăна 150 процент тултарса ĕçлет.

Етĕрне районĕнчи интеллигенци ячĕпе учитель Зайцева, Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницăсен ячĕпе Чистяков, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхозран Данилов, учитель Титов (Хĕрлĕ Чутай р.), Советский районри «Красная звезда» колхозран Трофимов юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем пурте суйлав умĕнхи пухăва пынисене Павлов юлташ кандидатуришĕн сасăлама чĕнчĕç.

Юлашкинчен 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Я. Павлов юлташ сăмах тухса каларĕ.

Суйлав умĕнхи пуху 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсене чĕнсе калани тата Сталин юлташ патне саламлă телеграмма яма йышăнчĕ.

Я. СОРОКИН.

ÇĔРШЫВ ВАЛЛИ ВĂРМАН ÇИТЕЛĔКЛĔ ХАТĔРЛЕР

Пирвайхи кунсем

ВĂРНАР, январĕн 27-мĕш. (**Телефон тăрăх**). ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ вăрман хатĕрлевĕнче çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен йышăннă постановленине колхозсемпе пĕрле вăрманта ĕçлекенсем те кăмăллăн кĕтсе илчĕç. Халĕ пирĕн коллектив пысăк çĕкленӳпе ĕçлет. Колхозсенчен çуран тата лашапа ĕçлеме темиçе вуншарăн килеççĕ.

Ĕнер пирĕн вăрманпромхозра 2004 çын тата лашапа 724 çын ĕçлерĕç. Калас пулать, Красноармейский район ытти районсенчен лайăхрах ĕçлет. Ку районран вăрмана 680 çын тата лашапа 328 çын килнĕ. Вăрнар районĕ 562 çын, лашапа 188 çын, Калининский район 771 çын, лашапа 196 çын янă.

Тӳрех каламалла, çакăн чухлĕ ĕç вăйне кĕтсе илме вăхăтра çителĕклĕн хатĕрленсе çитеймерĕмĕр. Пăчкăсем, пуртăсем тата напильниксем çитмеççĕ. Çавăн пирки ĕç тухăçлăхĕ пысăках мар-ха. Чăн та халĕ эпир çак йывăр лăха пĕтерес шутпа конкретлă ĕçсем туса ирттеретпĕр, анчах ăна тума каярах юлнă. Инженерно-технически работниксем, мастерсем пурте лесосекăсенче, вĕсем ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухас тата унпа туллин усă курас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Вăрмана ĕçлеме килнисене пурăнма хваттерсем-бараксем çитмеççĕ. Çавăнпа та чылайĕшне вăрман сывăхĕнчи ялсенче вырнаçтармалла пулчĕ. Партиллĕ-массăллă ĕç начар пулса пырать. Хаçат-журналсем çителĕксĕр. Агитаторсем япăх ĕçлеççĕ. Çак паха пример палăртмалла: Сталин ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ, агроном Мартынов юлташ колхозниксемпе пĕрле пĕр-ик кун вăрманта пулчĕ. Вăл колхозниксен ĕçĕпе, вăрманти ĕç йĕркисемпе интересленчĕ. Анчах кун пек примерсем тек çукпа пĕрех.

Е. И. САЗАНОВ.
Вăрнар вăрманпромхозĕн директорĕ.

Вăрманта ĕçлекенсем валли

СĔНТĔРВĂРРИ, январĕн 27-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Совнаркомпа ЦК ВКП(б) йышăннă постановление колхоз председателĕсен районри канашлăвĕнче тата райсовет исполкомĕн президиумĕнче сӳтсе-явса конкретлă мероприятисем туса ирттерме палăртнăччĕ. Унсăр пуçне ку постановление колхозниксене тата единоличниксене ăнлантарса панă.

Пуринчен малтан эпир вăрмана ĕçлеме каякансем валли хваттерсем хатĕрлеме тытăннă. Халĕ вăл çителĕклĕ. Ветеринари тата медицина енĕпе пулăшу парассине организациленĕ. Çăкăр пĕçерме ятарласа тăвать пекарня уйăрса панă. Чей вĕретсе ĕçме кирлĕ япаласене туписа патăмăр.

Халĕ нумай колхозсем вăрманта çуран тата лашапа ĕçлеме çынсем уйăрнă, вĕсенчен чылайĕшĕ паян ĕçе массăллăн тухса каяççĕ. Калас пулать, эпир ку ĕçре чылай кая юлтăмăр.

Я. Г. МАКЛАШКИН.
Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ.

Турттарма—каснă вăрман çук

КАЛИНИНО, январĕн 27-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, ĕнерхи кун вăрмана 1000 çын ытла çуран тата лашапа 350 çын тухса кайнă. Анчах касса хатĕрленĕ вăрман çук пирки лашапа кайнисенчен чылайĕшĕ каялла тавăрăнчĕç.

Совнаркомпа ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени колхозниксен хастарлăхне çĕклерĕ. Постановление ăнлантарăна панă хыççăн, Кӳлхĕрринчи «Трактор» колхозран çуран 52 çын, лашапа 12 çын тухса кайрĕç. Çавăн пекех «Новый путь», «Броневик», Папанин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксем те вăрманта ĕçлеме пыçăк хаваслăхпа тухса кайрĕç.

Анчах уйрăм колхозсем, сăмахран, «Пĕрлешӳ» колхоз (председателĕ Николаев), Эшмейкинăри колхоз (председателĕ Захаров) çĕнĕ йĕркепе тăрăх вăрман касса хатĕрлес, вăрман турттарас ĕçе хакламаççĕ, вĕсем колхозниксене организацилесе ĕçе ярасси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ.

Г. И. СКВОРЦОВ.
ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçленен секретарĕ.

Пысăк çĕкленӳ

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, январĕн 27-мĕш. (**Телефон тăрăх**). Колхозниксен производствăллă çĕкленĕвĕ кашни кунах ӳссе пырать. Виçĕмкун вăрманта 221 çын çуран тата 50 çын лашапа ĕçленĕ пулсан, паян колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх çуран 600 çын ытла, лашапа 200 çын ытла вăрмана тухса кайрĕç.

Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ пынă çынсем валли ĕç тупса çитерейместъ. Турттарма касса хатĕрленĕ йывăç пулман пирки «Великан» колхозран кайнă 25 лав каялла тавăрăнчĕç. Вăрманпромхоз хваттерсем те тупса парайман.

Г. А. АНТОНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вăрмана культбригада каять

ЭЛĔК, январĕн 27-мĕш. (**Телефон тăрăх, хамăр корр.**). Районри колхозсемпе ялсоветсенче СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă постановление сӳтсе-явăççĕ. Пур çĕрте те ку постановление тулли кăмăлпа ырлаççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем пĕрремĕш кварталти плана февралĕн 10-мĕшне тултарма пулчĕç.

Элĕк районĕн 26.000 кубла метр вăрман касмалла, 23.000 кубла метр турттармалла тата 21.000 кубла метр каснă йывăçа çулсем патне турттарса кăлармалла. Çак план тăрăх мĕнпур колхозсене задани çитерсе панă.

Ĕнер Çулавăç ялсоветĕнчи колхозсенчен çуран 57 çын, лашапа 23 çын, Чăваш Сурăмĕнчен 68 çын çуран, лашапа 17 çын, Тукташран 90 çын вăрмана тухса кайрĕç. Унсăр пуçне Вăрманкас ялĕнчи тата Чăваш Сурăмĕнчи колхозсен бригадирĕсем хăйсен бригадисене организацилесе вăрмана кайрĕç.

Тавăтри драмкружок членĕсем вăрманта ĕçлекенсем патне кайса спектакльсем лартса пама хатĕрленеççĕ. ВКП(б) райкомĕ культбригада кăларса ярать.

И. МОСЕЕВ.

Трактортсене юсас ĕçе пурнăçа кĕртменшĕн суд умĕнче ответ тыттараççĕ

(РСФСР прокурорĕпе А. А. Волин юлташпа калаçни)

РСФСР прокуратурин органĕсене чылай МТС-семпе машинно-тракторнăй мастерскойсенче тракторсене юсас плана тулса пыманни çинчен калакан сигналсем килнĕ. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн трактор паркне çитес çураки валли хатĕрлес ĕç çине преступленилле тимсĕр, пӳрне витĕр пăхнине кăтартса панă фактсене палăртнă.

Ярославль облаçĕнчи Петровский МТ Станцин 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 31 трактор юсаса пĕтермелле пулнă. 15 тракторне кăна юсанă. Кунта юрăхсăр тесе кăларса тăкнă тимĕртăмăр хушшинче юрăхлă чаççем тупнă, анчах шăпах çав чаççем çуккине пула тракторсене юсамасăр тăнă. Петровский МТС директорĕ А. А. Козлов тата старшни механик И. А. Новиков тракторсене юсас ĕçрен пăрăнса тăнă.

РСФСР прокуратури Ярославль облаçĕн прокурорне Козловпа Новикова уголовлă йĕркепе ответ тыттарма, ĕçе суда пама кăтарту панă.

Кинель МТ Станцинче (Куйбышев облаçĕ) тракторсем юсас плана прорыва кĕртсе ӳкернĕ. Сутăн илнĕ запаслă пайсене суту-илӳ тăвакан организацисен склачĕсенче темиçешер уйăх хушши выртнă. Тракторсене юсас ĕçе пурнăçа кĕртменнине пытарса тăрас тесе, МТС директорĕ Куликов государствăна улталас çул çине тăнă, суя сведенисем панă. Куликова тата старший механика Самкова суда панă.

Воронеж облаçĕнчи Тулиновский МТМ директорĕ Сергеенко пирки, контролер-браковщик Агапкин тата монтаж цехĕн механикĕ Орлов пирки уголовлă ĕç пуçласа янă. Мастерскойăн 1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне 54 трактор юсаса пĕтермелле пулнă, анчах пурĕ те 19 трактор кăна юсанă. Мастерской юсаса кăларнă 8 тракторта 60 яхăн пысăк дефект тупнă.

Прокуратурăн вырăнти органĕсем МТС-семпе машинно-тракторнăй мастерскойсенче тракторсем юсас ĕç çине тимлĕн пăхманни çинчен калакан сигналсене тĕрĕслеççĕ. РСФСР прокуратури вырăнсене çакăн çинчен кăтарту панă: машинно-тракторнăй парка çураки валли хатĕрлес тĕлĕшпе правительство панă задание мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине асăрхаса тăрас ĕçе вăйлатмалла, тенĕ.

Январĕн 25-мĕш. (ТАСС).

Тĕне хирĕçле докладсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кудемерти туллимар вăтам шкулта СВБ ячейки тăрăшса ĕçлет. СВБ членĕнче тăракансем 63 çынна çитрĕç. Ячейка секретарĕ И. Глухова юлташ тăрăшнипе колхозниксем хушшинче тĕн ултавĕсем çинчен лекцисемпе докладсем иртерпĕ.

Биологипе вĕрентекен учитель С. Данилов юлташ лекцисене лайăх хатĕрленсе иртерет. Вăл лекцисене биологи наукипе çыхăнтарать. Унăн докладне колхозниксем юратса итлеççĕ.

П. Козловский.

Комсомолри пропаганда ĕçне анлăн сарса пырассишĕн

Комсомолăн Çĕмĕрле районĕнчи организацийĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тухнă хыççăн пропаганда ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетрĕ. Комсомолецсен пысăк йышĕ парти историне харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пуçларĕ. Кĕнекепе ĕçлесси вĕренӳре тĕп форма пулса тăчĕ.

Тăрăшса тата кашни куллен вĕренсе пыни парти историне тарăннăн ăнланса илме май парать. Вĕренекен комсомолецсен производствăри хастарлăхĕ, вĕсен активлăхĕ ӳссех пырать.

Хальхи вăхăтра пирĕн районра 1300 комсомолецран парти историне харпăрхăй тĕллĕн 807 çын вĕренеççĕ. Вĕсен хисепĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе пĕтернĕ, Ленинăн, Сталинăн уйрăм произведенийĕсенĕ вĕренме тытăннисем те пур.

Иртнĕ çулта харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пултарайман юлташсем валли кружоксем организациленĕ пулнă. Вăл кружоксенчен 86 комсомолец вĕренсе тухнă. Тата политграмотăна вĕренмелли кружоксенчен 130 комсомолец вĕренсе тухнă. Халĕ тата икĕ кружок ĕçлеççĕ, вĕсенче 34 çын вĕренет.

Парти историне вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тунă. Комсомолецсене валли ятарласах лекцисемпе докладсем, консультацисем ирттернĕ. Ку ĕçе комсомол активне явăçтарнă. Тата эпир парти историне вĕренекенсемпе юлташла калаçусем те туса ирттернĕ.

Комсомол организацинче пропаганда ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе пире парти райкомĕ тăтăшах пулăшса пырать. Вăл ирттерекен лекцисемпе докладсене итлеме комсомолецсемпе çамрăксем активлăн çӳреççĕ.

Уйрăм комсомолецсем мĕнле вĕреннине илес пулсан, çак юлташсем çинчен каламалла. Комсомолец-учитель Бачков юлташ хăй тĕллĕн куллен вĕренсе пырать. Вăл «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе пĕтернĕ. Çакăн хыççăн Ленинăн тата Сталин юлташăн уйрăм произведенийĕсене чылай вуласа тухнă. Конспектсене тĕплĕн çырса пырать. Комсомол райкомĕ унăн пултарулăхне кура, ăна пропаганда ĕçне явăçтарнă. Халĕ вăл парти историне вĕренекенсемпе консультацисем, уйрăмăн калаçусем, докладсем ирттерет.

«Большевик» заводра ĕçлекен комсомолкăсем Воробьевăпа Прохорова юлташсем рабочисем хушшинче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, иккĕшĕ те производствăра пырă пример кăтартаççĕ, социализмлă ăмăртăва сарсах пыраççĕ. Вĕсем те парти историне «Кĕске курс» тăрăх вĕренсе пĕтернĕ.

Çак юлташсем пек тăрăшса ĕçлекенсем, хăйсен пĕлӳне куллен ӳстерсе пыракансем ку заводра татах та пур.

Вĕсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци умĕнхи ăмăртура та паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Поликлиникăри комсомол комитечĕн секретарĕ Юнусова юлташ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕреннĕ чухне Ленин тата Сталин çырнă произведенисемпе усă курать, художествăллă произведенисем те нумай вулать. Вăл лекцисемпе докладсем итлеме активлăн çӳрет. Хальхи вăхăтра Юнусова юлташ «Кĕске курсăн» VII-мĕш сыпăкне вĕренет.

Комсомол оргăнĕсен аппаратне урăхпатса яланлăх комиссисем тунă хыççăн эпир хамăрăн ĕçре хăшпĕр улшăчусем тума пултартăмăр. Виçĕ уйăх хушшинче парти историне вĕренекенсене пулăшас майпа пиллĕк хутчен консультаци тата тĕрлĕ темăсем тăрăх ултă хутчен доклад туса ирттертĕмĕр. Калас пулать, консультацисене тата докладсем итлеме комсомолецсем кăна мар, союзра тăман çамрăксем те чылай пынă.

Анчах комсомолăн уйрăм пуçламĕш организацисенче пропаганда ĕçĕ кирлĕ вырăнта марăха. Ку вăл пуçламĕш организацисен ĕçĕсене тĕрĕслеменĕ вăхăтра лайăх палăрчĕ. Уйрăм организацисенче парти историне вĕренес ĕç питех те хуллен пырать, хăшпĕр çĕрте тата комсомол активĕ хăй те кая юлнă. Акă, комбинатра «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» 81 комсомолец вĕренеççĕ, вĕсенчен 25 çын пĕрремĕш сыпăка, 21 çын иккĕмĕш сыпăка, 8 çын виççĕмĕш сыпăка тата 10 çын пиллĕкмĕш сыпăка вĕренсе çитнĕ. Парти историне вĕренесси кунта ытла та вăрахăн пырать.

«Труженик» заводра куншан та янăхрах. Кунта «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» 17 комсомолец вĕренмелле, вĕренме условисем пур. Анчах паянхи куна парти историне 8 çын кăна вĕренеççĕ. Çакăншăн, паллах, комсомол организацин секретарĕ ăйăплă. Вăл ку ĕçпе сахал интересленет, пухусенче ку ыйтăва сӳтсе-явмаççĕ, вĕренесси çинчен уйрăм комсомолецсемпе калаçни те çук.

Комсомол райкомĕн агитацийĕпе пропаганда комиссийĕ малашне кашни комсомолецах политикăллă пĕлĕвĕ ӳстерсе пыма пулăшас тĕлĕшпе тĕплĕрех, конкретлăрах ĕçсем тума палăртать. Пирĕн комсомолăн пуçламĕш организацисене ытларах пулăшса пымалла, лекцисемпе докладсем, консультацисем ытларах ирттермелле. Кам мĕнле вĕренсе пынине куллен тĕрĕслесе тăмалла, юлташла калаçусем туса ирттермелле.

Д. ГУСЬКОВ.

ВЛКСМ Çĕмĕрле райкомĕн агитацийĕпе пропаганда комиссийĕн председателĕ.

Комсомол активĕн пухăвĕ

Январĕн 24-мĕшĕнче комсомолăн Шупашкар хула организацин активĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Актив пухăвĕнче ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Эрре юлташ ВЛКСМ Чăваш обкомĕн иккĕмĕш пленумĕн итогĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Комсомол активĕн пухăвĕ çарпа физкультура ĕçне вăйлатасси тата комсомолецсен Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кросне тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илесси çинчен ытларах чарăнса тăчĕ.

Комсомолăн хулари организацийĕсем умĕнче тăракан ответлă задачăсеченĕри вăл — çарпа физкультура ĕçне тата тăрса вĕренесси, йĕлтĕрлĕ кроса ăнăçлăн ирттересси. Комсомолăн чылай организацийĕсем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ, кроса çине тăрса хатĕрленеççĕ. Чăвашсоюзри, кооптехникумри, пединститутри организацисем тата физкультура коллективĕсем пулас кросра хисеплĕ вырăн йышăнасси паллă, вĕсем кроса хутшăнма кăтартуллăн хатĕрленеççĕ.

Çав хушăрах Наркомземри, политпросвет шкулти организацисем кроса хатĕрленес тĕлĕшпе ку вăхăта çитсе те нимĕн те туман. Çак организацисенче кашни комсомолецăн физкультурник пулмалла, тенине манса хăвараççĕ. Хăшпĕр организацисенче халĕ те командăсем туса çитермен.

Йĕлтĕр спорчĕ — чи анлăн сарăлнă спорт. Йĕлтĕре боец хăйĕн винтовкине юратнă пек юратмалла.

Февралĕн 2-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кроссĕ пуçланать. Вăхăт нумай юлмарĕ. Пуринпĕн те паллă, ГТО значокĕн хĕллехи нормисене паманнисене кроса хутшăнтарăççĕ. Çавăнпа та юлнă вăхăт хушшинче нормăсем парассине вăйлатмалла. Çакăнпа пĕрлех комсомол организацисен январĕн 28-мĕш тĕлне кроса хутшăнасси çинчен пĕлтерсе ВЛКСМ хула комитетне заявкăсем памалла.

Вăтам шкулти çарпа физкультура ĕçĕ

Шăхасанти вăтам шкулта иртнĕ вĕренӳ çулĕнче те оборона кружокĕсем ĕçленĕ. Анчах вăл кружоксенче вĕренекенсем теориллĕ пĕлӳ кăна илнĕ, вĕренĕве практикăпа çыхăнтарман.

СССР Осоавиахим Центральный Совечĕ Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕренмелли çĕнĕ программа туса çитĕплетрĕ. Вăл программăна шкулти комсомолецсен тата Осоавиахим членĕсен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă хыççăн, çарпа физкультура ĕçне çĕнĕлле вĕренме тытăнчĕç.

Ĕçе çĕнĕлле организацилени Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентессине чылай лайăхлатрĕ. Çарпа физкультура ĕçне лайăх вĕренсе пырас майпа шкулта пĕр команда, 4 группа организациленĕ. Унта 120 ачана явăçтарнă. Осоавиахим организацине военрук А. Соловьев юлташ ертсе пырать. Группа командирĕсем: Е. Григорьев, Н. Никольский, В. Анисимов тата М Слесарев комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Группăсенче Осоавиахим членĕсене тĕрĕс утма, çавăрăнма тата ыт. те вĕрентеççĕ. Тактикăллă занятисем те час-часах пулса иртеççĕ. Халĕ Осоавиахим членĕсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă тĕле «На штурм» вăйăна вĕренес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Команда членĕсен занятийĕсене ирттерме ятарласа расписани тунă. Çав расписани тăрăх, эрнере виçĕ хутчен группăсен занятийĕсем, команда тата група командирĕсен занятийĕсем икĕ хут пулса иртмелле. Вĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

Осоавиахим членĕсем XVIII партконференци уçăлнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илес майпа тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавна май кашниех 3-шер оборона значокĕн нормисене парассишĕн кĕрешеççĕ. Ку вăхăтчен 26 ача ГСО значокĕн нормине, 65 ача ПВХО значокĕн нормине, 105 ача ГТО значокĕн хĕллехи нормисене пачĕç.

В. Яковлев.

Комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросне тĕплĕн хатĕрленер

Халĕ профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кроссĕ иртсе пырать тата пĕтĕм çĕршыври комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленеççĕ. Çав кроссен задачи вăл — ĕççыннисен сарлака массисене физкультура ĕçне анлăн явăçтарасси тата йĕлтĕрпе ярăнма вĕрентесси пулать. Шупашкар хула условийĕнче çак мероприятине питех те ăнăçлăн ирттерме пулать. Кунта комсомол пуçламĕш организацисен çине тăрса кăна ĕçлемелле.

Тӳрех калас пулать, Шупашкар хулинче комсомолецсен кросне хатĕрлenесси çителĕксĕр пулса пырать. Нумаях пулмасть ВКП(б) хула комитечĕ йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленесси çинчен ятарласа ыйту лартса сӳтсе-явнăрĕ, комсомол организацисем кроса хутшăнма янăх хатĕрленнине палăртрĕ. Уйрăм организацисенче çак ыйтупа пачах интересленмеççĕ. Сăмахран, кирпĕч заводĕнче (ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Васильев) кроса хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Крахмалтреста мĕнпурĕ те пĕр мăшăр йĕлтĕр кăна, вăл та пулсан ача ярăнмалли йĕлтĕр кăна. Хлебтреста (комсомол комитечĕн секретарĕ Низанова) кросс çинчен нумай шавлаççĕ, çĕнĕ тумаççĕ. Хăшпĕр çĕрте йĕлтĕрсене сыхласа усрама та тăрăшмассĕ. Акă, тирсăран комбинатĕнче 35 мăшăр йĕлтĕртен 5 мăшăр çеç тăрса юлнă. Комсомолецсем тренировкăсене тухмаççĕ.

Комсомолăн чылай организацийĕсем йĕлтĕрлĕ кроса тĕплĕн, çине тăрса хатĕрленеççĕ. Стройтехникумра кашни пиллĕк çынран йĕлтĕрçĕсен командисене тунă, тренировкăсене йĕркеллĕ ирттереççĕ. ГТО значокĕн хĕллехи нормисене 24 çын, БГТО значокĕн нормисене 65 çын панă. Комсомолецсемпе çамрăксем каникул вăхăтĕнче республикăри районсем тăрăх йĕлтĕрлĕ поход ирттерме хатĕрленеççĕ.

«Правда» спорт обществипе Осоавиахим членĕсем канмалли кун — январĕн 19-мĕшĕнче пĕр кунлăх хĕллехи лагерь организацилеме, занятисене малтан хатĕрленĕ расписани тăрăх ирттернĕ. Ытти чылай организацисем те кроса тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Кроса лайăх хатĕрленсе ăнăçлăн иртересси тата йĕлтĕрлĕ спорта вĕренесси пуçламĕш парторганизацисем комсомол организацисене ĕçре пулăшса, ертсе пынинчен нумай килет. Комсомолăн Шупашкар хула организацин кроса хатĕрленес тĕлĕшпе республикăна пример кăтартмалла.

И. АСАФЬЕВ.

Молдаван ÇС Республикинчи парторгăнсен отчечĕсемпе суйлавĕсем

КИШИНЕВ, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Молдаван ÇС Республикинчи пуçламĕш парторганизацисенче отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Январĕн 26-мĕшпе февралĕн 2-мĕш хушшинче районсенчи, хуласенчи тата уездсенчи парторганизацисен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Февралĕн 6-мĕшĕнче Кишиневра Молдавири большевиксен коммунистла партийĕн пĕрремĕш съезвĕ уçăлать. Съездăн кун йĕркинче — ЦК КП(б)М отчетлă доклачĕ, Центральный Комитетпа ревизи комисси суйлавĕсем.



Мускав Çар Округĕнчи Н-ски чаçĕн хĕллехи тактикăллă занятийĕсем. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: сержант комсомолец В. Т. Лунин отделенийĕ йĕлтĕрсем çине тăрса пеме хатĕрленет.

А. Межуев фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

Урăх мĕн кирлĕ?

Пĕрремĕш Элĕк районсовет исполкомĕн председателĕ Весновский юлташ районсоветăн спортпа физкультура енĕпе ĕçлекен инструкторĕн сĕтелĕ умĕнчен иртсе пынă. Çакăнта вăл кăшт чарăнса тăрса, сĕтелсем çинчи хутсем çине пăхса илнĕ. Ун чухне спортпа физкультура инструкторĕ Павлова юлташ темĕнле графаллă хутсем çине ялсен тата çынсен ячĕсене çырса ларнă.

— Мĕн ку?

Весновский ку хутсене тыта-тыта пăхнă, вĕсенчен хăшне-пĕрне самай хушă вуласа, пуçне килĕшӳллĕн сулласа илнĕ.

Инструктор, районсовет исполкомĕн председателĕ кĕтмен çĕртен ун патне пырса ĕçсемпе çавнашкал хытă интересленнине кура, хĕллехи вăхăтра тумалли ĕçсен планĕсене, унпа пĕрлех вырăнсенчи физкультура коллективĕсен ыйтăвĕсене кăтартма пуçланă, малашнехи ĕмĕтсемпе мухтанма тытăннă.

— Пысăк ĕçсем тума шухăшсем пур, — теннĕ вăл председатель умĕнче хĕвĕлленсе кайнипе. — Спортăн хĕллехи сезонне халех хатĕрленмелле. Тĕрлĕрен значоксен нормисене паракан темĕн чухлĕ пуласçĕ ун чухне! Походсем пуласçĕ тата...

— Ну, юрать, —чарнă ăна председатель. — Эпĕ каямăха. Эсĕ халĕ кунта... Инструктор малтанхи пек каллех графаллă хутсем çине хурапа тем тĕрленĕ...

Председатель пӳлĕмрен тухса кайнă. Вăхăт нумай иртнĕ, сахалти инструкторшăн çавтери телейлĕ кун килсе тухнă. Ура çĕре перĕнни сисĕнмен унăн, ытла савăнса ӳкнĕ.

— Епле спортпа физкультура ĕçне хаклама пĕлекен председатель пулчĕ-ха, Весновский! — кăшкăрса янă вăл сисмен хушăра. — Кăшт анчах эпĕ ăна пĕркун хам сĕтел патĕнче спортпа физкультура çинчен тата малашнехи шухăшсене каласа патăм. Епле пысăк ĕç туса хучĕ вăл. Малалла никам куçĕнчен те пăхмастăп ĕнтĕ. Физкультура движенийĕ, курăн ак, нихăçанхинчен те ытларах сарăлса каять!

Инструктор умĕнче райсовет исполкомĕн решенийĕ выртнă. Ку решенирен çакă курăнчĕ: районри Çирĕккассинчи тата Шурăçри обозоремонтнăй мастерскойсене райсовет исполкомĕ 1000 мăшăр йĕлтĕр туса кăларма хушнă.

Физкультурăпа спорт ĕçĕ чăнахах хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнса тăма тытăнасси тата çакăнтан курăнса тăнă: иртнĕ çулти ноябрĕн 26-мĕшĕнче ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче Осоавиахимăн районри совечĕн отчетне итленĕ. Çакăн хыççăн Осоавиахимăн районри советне спортăн хĕллехи сезонне валли спорт инвентарĕсем тупса хатĕрлеме хушнă. Райсоюза 500 мăшăр йĕлтĕр, 100 мăшăр коньки кӳрсе килме заявка панă. Унпа пĕрлех унăн йĕлтĕр костюмĕсем те кӳрсе килмелле.

— Ох, ĕç каять ак! Йĕлтĕрĕ те, костюмĕ те пулать. Курăн ак!

Унтанпа вăхăт чылай иртнĕ.

Çирĕккассинчи тата Шурăçри обозоремонтнăй мастерскойсем халĕ те йĕлтĕрсем тума тытăнман-ха. Райсоюз та пĕр йĕлтĕр те кӳрсе килмен-ха.

Элĕк район центрĕнче 9 мăшăр йĕлтĕр пур. Çак йĕлтĕрсемпе район пысăк ĕçсем туса ирттерме шухăшлать. Малтанах — январĕн 26-мĕшĕнче профсоюзсен кроссĕн юлашки кунĕ; иккĕмĕшĕнчен — февралĕн 2-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа иртекен кросс пуçланмалла.

Вырăнсене хутсем янă: профсоюз членĕсене пурне те, çавнашкалах мĕнпур комсомолецсене кроса хутшăнтармалла, тенĕ.

Асăннă кунсем инçе мар. Урамра кашни пĕрĕпĕрне хирĕç тĕл пулса, ыйтусем параççĕ:

— Мĕн тума пĕлес халь?

Физкультурăпа спорт инструкторĕ йĕлтĕр çук, тет.

ВЛКСМ райкомĕ йĕлтĕр çук, тет.

Осоавиахимăн районри совечĕ йĕлтĕр çук, тет.

Профсоюзсен вырăнти комитечĕсем йĕлтĕрсем çук, теççĕ.

Райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ кăна пăшăрханмаççĕ: вĕсем йĕлтĕрсем пирки иртнĕ çулта йышăннă решенисем пур теççĕ. Çавсемпе кроссене хутшăнсан анчах! Урăх мĕн кирлĕ? Пирĕн шутпа çав решенисене пурнăçлани кирлĕ.

Ив. МОСЕЕВ.

Комсомолецсем колхоза пулăшаççĕ

Красноармейский районри «Волга» колхозри пуçламĕш организаци 8 комсомолеца пĕрлештерсе тăрать. Комсомолецсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç, вĕсем колхоза çуракине хатĕрленме пысăккăн пулăшса пыраççĕ. Ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ, вăрлăхсене сортласа тасатса, акма юрăхлă кондицине çитернĕ. Комсомолецсен вăййипе кĕл тага кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 45 центнер пухнă, колхозри транспорт хуçалăхне юсаса йĕркеленĕ.

П. Яковлев.

Ялхуçалăх выставкин участникĕ пулассишĕн кĕрешет

ЭЛЕК. Чăваш Сурăмĕнчи вулав çурчĕ хăйĕн ĕçĕсене лайăхлатса пырать. Кружоксем аван ĕçлеççĕ.

Вулав çуртĕнче хутла пĕлменнисене вĕрентме тытăннă. Вĕренме 12 çын çӳрет.

Кĕнеке илсе вулакансен йышĕ те ӳссех пырать. Юлашки вăхăтра кĕнеке илсе вулакансен хисепĕ 150 çынна çитрĕ.

Вулав çурчĕн заведующийĕ Соловьев юлташ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулассишĕн кĕрешет.

П. Иванов.

Хĕрарăм-руководительсем

СЕНТЕР. Урпаш ялсоветне 6 колхоз кĕрет. Çак колхозсем иртнĕ çулта пысăк тухăçлă тырпулăшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пычĕç. Пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ А. Зинькова юлташ) колхозсенче ăмăртăва пуçарса, ертсе пычĕ. Коммунистсене уйрăм колхозсем, бригадăсем çумне çирĕплетсе тухнă. Çавна май колхозсем 1940 çулта паха çитĕнӳсем турĕç.

Халĕ пуçламĕш парторганизаци Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пыракан ăмăртăва кирлĕ пек пуçарса пырать. Колхозсем, бригадăсем хĕрсе çуракине хатĕрленеççĕ.

Кирек мĕнле ĕçе те техникăна вĕренсе çитнĕ кадрсем татса параççĕ. Çакна парторганизаци тĕрĕс ăнланса илнĕ темелле. Кунта чи малтанах кадрсене воспитани парас, уйрăмăнах кадрсене хĕрарăмсенчен хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозри фермăсенче ĕçлекен хăрарăмсем ĕçре ӳссе пыраççĕ. Акă, А. Васильева тăватă çул хушши пĕр улшăнмасăр сĕт-сӳ ферминче ĕçлет. Хăйĕн ĕçне лайăх вĕрентсе çитнĕ.

Л. Кузьмина юлташ малтан Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулнă, халĕ Урпаш ялсовет председателĕ пулса ĕçлет. 1940 çулта ялсовета кĕрекен колхозсем вăтам шутпа кашни гектартан 15 центнер тĕштырă пуçтарса илнĕ.

Ялсоветĕнче 18 ферма. Çав фермăсенче хĕрарăмсем йышлăн ĕçлеççĕ, паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем хушшинче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсем чылай.

Ялсовет депутачĕсем-хĕрарăмсем хăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе туса пыраççĕ. Акă, депутат А. Крылова юлташ хăйĕн суйлав округĕнче агитацине массăллă ĕçе лайăх туса пырать.

Пуçламĕш парторганизаци хĕрарăмсене обществăллă ĕçе явăçтарас, вĕсенчен кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Хĕрарăмсем колхозра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Вĕсем пур ĕçре те хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

Г. СОЛОВЬЕВ.

Шкулсен ĕçне татах та çӳлĕрех сыпăка хăпартар!

Шкулсем вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулне вĕçлесе иккĕмĕш çурçула пуçласа ячĕç. Пĕрремĕш çурçулăн итогĕсем шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхĕ ӳссе пынине, шкулти дисциплинăпа йĕркелĕх сирĕпленсе пынине кăтартрĕç. Учительсем те, вĕренекенсем те пĕрремĕш çурçул хушшинче хăйсен ответлăхне туйса ĕçлени палăрчĕ.

Республикăри шкулсенче 503 класра вĕренекенсем вĕренӳре кая юлса пыраççĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче вĕренекенсем хушшинче 21 процент ытларах вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман пулсан, кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнче вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем 18 процент шутланаççĕ. Шупашкар районĕнчи Тохмейри пуçламĕш шкулта (заведующийĕ Гаврилова юлташ), Сĕнтĕр районĕнчи Сергеевкăри (Мастаченко юлташ), Елкинăри (Токина юлташ) пуçламĕш шкулсенче, Шăхасан районĕнчи Калиновкăри (Волков юлташ) пуçламĕш шкулта, Улатăр районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи шкулта т. ыт. те мĕнпур вĕренекенсем вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Социализмлă ăмăртура мала тухса хĕрлĕ ялăн илме тивĕçлĕ пулнă Шетмĕпуç шкулĕнче (Ишлей р.) 186 ача вĕренет, пурте вĕсем вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. 29 ача вĕренӳ отличникĕсемпе ударникĕсем пулса тăраççĕ, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем пĕр ача та çук.

Ямайкассинчи туллимар вăтам шкулта (Ишлей р.) 119 ача вĕренет, вĕсенчен пĕр ача анчах вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймасть. 27 ача вĕренӳ отличникĕсемпе ударникĕсем пулса тăраççĕ.

Пĕрремĕш çурçул пĕтнĕ çĕре шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн пахалăхĕ тĕлĕшпĕнчен Ишлей районĕ малти вырăна тухрĕ (райсутĕç пайĕн заведующийĕ Шалфеева юлташ). Ку районра вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем 8 процент ытларах шутланаççĕ. Районĕпе 69 класра вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисем пĕр ача та çук. Çак çитĕнӳ, паллах, райсутĕç пайĕ, шкул директорĕсемпе заведующийĕсем тимлĕн, ответлăха туйса ĕçленин, учительсене тивĕçлĕн ертсе пынин тата ĕçре пулăшса пынин результачĕ пулса тăрать.

Пĕрремĕш çурçула Тăвай районĕ те чылай паллă çитĕнӳсемпе вĕçлерĕ. Районра вĕренӳре 100 проценчĕпех ĕлкĕрсе пыраканни 22 класс шутланать, 30 учитель вĕрентӳ отличникĕсемпе ударникĕсем пулса тăраççĕ.

Шкулсен, учительсен ĕçне тĕрĕслесе, вĕсене ĕçре пулăшса пырасси тепалăрмаллах лайăхланчĕ. Ишлей районĕнче çутĕç пайĕ пĕрремĕш çурçулта мĕнпур шкулсен ĕçне тĕрĕслесе тухнă, чылай шкулсене икшер хут тĕрĕсленĕ. Çавăн пекех шкулсен ĕçне Сĕнтĕр районĕнчи (çутĕç пайĕн заведующийĕ Кваскова юлташ), Елчĕк районĕнчи (Осипов юлташ) çутĕç пайĕсем тивĕçлипе тĕрĕслесе пыраççĕ. Ку районсенче шкул директорĕсемпе заведующийĕсене, учительсене çутĕç пайĕсем ĕçре куллен ертсе пырса татăклă кăтартусем параççĕ.

Ишлей, Елчĕк, Вăрнар, Калининский, Красноармейский, Сĕнтĕр, Шăмăршă районĕсенче шкул çулне çитнисене пурне те вĕренĕве явăçтарнă. Кувакино, Первомайский, Йĕпреç районĕсем пурне те вĕрентесся çинчен пĕтĕсшĕн çитменлĕхсене пĕтересситĕн çине тăрса кĕрешмелле. Çутĕç органĕсен, шкул инспекторĕсен шкулсен ĕçне, уйрăмах вăтам шкулсен ĕçне, тĕрĕслесе ĕçе вăйлатмалла. Шкул инспекторĕн вырăнĕ—шкулта, вăл шкулсемпе куллен çыхăнса тăрса, шкул директорĕсене, учительсене вăхăтра кирлĕ кăтартусем парса тăмалла, шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене вăхăтра палăртса, çитменлĕхсене пĕтерес ĕçе организацилемелле. Аппаратра ларса хутсем çырса ертсе пынинчен, паллах ĕнтĕ, усă сахал.

Шкул руководителĕсен учительсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăрса, кашни учителе тивĕçлĕ пулăшу парса пымалла. Шкул директорĕ, вĕрентӳ пайĕн заведующийĕ учительсен урокĕсенче час-часах пулмалла, вĕренекенсен пĕлĕвĕпе паллашмалла, программăна мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслемелле, вĕренекенсен çыру ĕçĕсене пăхса тухмалла. Шкулта чи лайăх ĕçлекен учительсен опычĕпе мĕнпур учительсене паллаштарас пулать.

Учительсен январьти канашлăвĕсем пирĕн учительсем хушшинче паллă ăстасем, хăйсен ĕçне тĕплĕн пĕлекенсем пуррине палăртрĕç. Çав учительсен опытне мĕнпур учительсем хушшине сарасси Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн, Учительсен пĕлĕвне хăпартас тĕлĕшпе ĕçлекен институтăн черетри паллă ĕçĕ пулса тăрать.

Малта пыракан учительсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçĕнче татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешсе пыраççĕ. Çак социализмлă ăмăртăва мĕнпур учительсене явăçтарса, вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш çурçулĕнче шкул ĕçне тĕпренех лайăхлатассишĕн пĕтĕм вăя хумалла.

А. ОТАЧКИН.

Тата пысăкрах тухăç илессишĕн

1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пирĕн колхоз пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлерĕ. Колхозниксем колхоз производствинче тăрăшса тата ăна юратса ĕçленипе, агротехникăллă мероприятисене вăхăтра пурнăçласа пынипе кашни гектартан вăтам шутпа 17,43 центнер тĕштырă туса илтĕмĕр. Хăшпĕр звеносенче 28,23 центнера çитнĕ. Уйрăмăнах А. Смирнов, Ф. Сумăнов юлташсем ертсе пыракан звеносем паллă çитĕнӳсем турĕç. Тăвату çул хушшинче колхоз кашни гектартан 14,25 центнер тĕштырă туса илнĕ. Çавăнпа та «Большевик» колхоз икĕ çул хушши Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулчĕ. 1941 çулта та выставка участникĕ пулма кандидата тăратнă.

Колхоз обществаллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те чылай çитĕнӳсем турĕ. Хальхи вăхăтра колхозăн 5 ферма пур. Вĕсенчен виççĕшне 1940 çулта организацинленĕ. Вăл фермăсенче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетме панă государство планне ытлашшипех пурнăçланă. Акă, сăмахран, сĕт-çу ферминче планпа 40 ĕне пулмалла пулнă пулсан, халĕ унта 44 ĕне шутланать, вĕсенчен сăваннисем 18. 1940 çулта колхоз çĕнĕрен телятник, омшаник, птичник, кухня тата фермăсенче ĕçлекен колхозниксем валли пурăнмалли çурт лартрĕ. Сĕт-çу фермин тупăшĕ 1939 çултипе танлаштарсан, икĕ хут ӳсрĕ.

1940 çулта эпир колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 4,5 килограмм тĕштырă, 1 тенкĕ те 50 пус укçан, 11 килограмм вылăх апачĕ валеçсе патăмăр. Николай Папманов колхозник çемьи 820 ĕçкунĕшĕн 225 пăт тĕштырă, 1230 тенкĕ укçа тата çителĕклĕ таран вылăх апачĕ илчĕ. Никифор Иевлев çемьи 785 ĕçкунĕшĕн 216 пăт тĕштырă, 1180 тенкĕ укçа илчĕ. Кун пек тĕслĕхсене татах та нумай кăтартса пама пулать. Колхозниксем чăннипех те пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма пуçларĕç.

Эпир 1940 çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларастпăр. 1941 çулта вăйлă тырпул туса илес майпа ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăличчен çуракине хатĕрленсе çитме тăрăшатпăр.

Колхозăн кулленхи ĕçне туса пыма ялти интеллигенципе колхоз клубĕ анлăн пулăшса пыраççĕ. Клуб пуçарнипе кăçал эпир стахановла шкул организацилерĕмĕр. Унта 35 колхозник вĕренет. Занятисем вăхăтра пулса пыраççĕ. Вĕренĕве практикăпа çыхăнтаратпăр.

1941 çулта эпир вăйлă тырпулăн, обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тата колхозăн обществăллă хуçалăхне вăйлатассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тăрăшатпăр.

И. ЕЛАХОВ.

Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ.

Агротехникăна пĕлни питех те кирлĕ

Сĕр ĕçне агротехника вĕрентнĕ тăрăх туса пыракан колхозсенче тырпул тухăçне çулран çулах ӳстерсе пыраççĕ. Агротехникăна пăхăнса ĕçлемен колхозсенче тырпул тухăçĕ яланах çигелĕксĕр пулать. Яндушри «Çамрăк вăй» колхозра 1939 çулта ыраша ытла тарăн акса хăварнă. Вăл çулхине тăпрара нӳрлĕх сахал пулнă. Акнă чухне çакна шута илмен. Çакна пула ĕнтĕ ыраш калчийĕ питех те сайра шăтса тухнă. Çуркунне те вăйланса юлайман. Калча питĕ сайра тата имшерке ӳсет пулсан кирлĕ чухлĕ тырпул туса илме çук. Çавăн пек пулнă ку колхозра та. Вăтам шутпа илсен кашни гектартан 7 центнер ытларах çеç ыраш пухса илнĕ. Агротехникăна лайăх пĕлнĕ тата ăна пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынă пулсан çавăн пек пулас çукчĕ.

Колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илме пулнă. Çакна май ĕнтĕ колхозниксем хăйсен агротехникăллă пĕлĕвĕсене ӳстерсе пыраççĕ. Стахановла шкул ĕçлет. Унта пиллĕк бригадир тата звеновдосем пулма палăртнă колхозниксем—пурĕ 20 çын вĕренеççĕ. Стахановла шкулта ВКП(б) XVIII съезчĕ ялхуçалăхне аталантарса пырас тĕлĕшпе йышăннă решенине, ялхуçалăх артелĕн уставне те вĕреннĕ. Селекци станцинчи агроном Дмитриев юлташ ӳсен-тăрансем тĕлĕшпе Мичурин тунă паха опытсем çинчен, колхоз председателĕ С. Григорьев çĕре мĕнле çемçетмелли çинчен лекци вуланă. Малта пыракан çĕршер колхозсем хăйсен çитĕнĕвĕсене Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартса пачĕç. Колхозниксем выставкăра пулнă колхозсен ĕç опычĕсемпе, вĕсем тунă çитĕнӳсемпе интересленеçç. Колхозник Музалов юлташ Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине кайса курнă. Унта курни-илтни çинчен стахановла шкулта вĕренекенсене каласа кăтартнă.

Çапла ĕнтĕ стахановла шкул занятийĕсем интереслă иртеççĕ. Пурĕ 10 заняти пулса иртнĕ.

Колхоз правленийĕ производствăллă план тума тытăннă. Унта тырпул тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене кăтартса параççĕ. Планра кăтартнă хăшпĕр ĕçсене пурнăçа кĕртме тытăннă. 1.150 лав тислĕк турттарса кăларса пысăк купасем туса лартнă. 55 центнер кĕл, 11 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Сĕлĕ тата тулă вăрлăхĕсене сортласа пĕтернĕ. Пăрса вăрлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн тасатаççĕ.

Тăрăшса ĕçлеççĕ. Апла пулми те çуракине хатĕрленесси çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Вырăнти удобренисем (торф, юшкăн) хатĕрлесси начар пырать. Кăмрăк вăхăтра кӳрсе килмен. Çакна пула ялхуçалăх машинисене юсама çак кунсенче кăна тытăннă. 35 плугран 3 плуг çеç юлнă.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илес пулсан питех те тимлĕн ĕçлемелле. Çакна ăнланса илнĕ «Çамрăк вăй» колхозра. План тăрăх пăхнă пур ĕçсене те пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ. Колхоз активĕ агротехникăна тимлĕн вĕренет. Нимĕн иккĕленмелли те çук: ситменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерсе, çуракине большевикла хатĕрленсе кĕтсе илеç, тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе хăйсем умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлĕç.

Çĕрпӳ. (Хамăр корр.).

Эпĕ забойщик пулатăп

Эпĕ Донбасра ФЗО шкулĕнче вĕренетĕп. Уята шахтăсене ĕçлеме пысăк квалификациллĕ рабочисем хатĕрлеççĕ. Эпĕ забойщиксен группинче вĕренетĕп.

Пирĕн забойщиксен группи ăмăртса вĕренсе пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çак кунсенче шкулта тĕрĕслӳ пулса иртрĕ. Тĕрĕслӳре пурте тенĕ пекех отлично тата лайăх паллăсем илчĕç. Вĕренӳре юлса пыракансем çук.

Вĕренӳ ĕçне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, эпир шахтăра ĕçлеме хатĕрленетпĕр. Шахтăра Стаханов пек ĕçлеме вĕренессишĕн кĕрешетпĕр.

А. Сапожников.

Донбасс.
15-мĕш №-лĕ ФЗО шкулĕ.

Чăваш АССР Республикинчи колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе сĕт тăратас тĕлĕшпе районсем тăрăх çирĕплетсе панă нормăсем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1941 çулти январĕн 25-мĕшĕнче йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче йышăннă постановлени тата ССР Союзĕн Совнаркомĕ суменчи Экономсовет январĕн 21-мĕшĕнче йышăннă 83-мĕш номерлĕ постановлени тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш АССР Республикинчи колхозсем государствăна сĕт тăратас тĕлĕшпе районсем тăрăх çакăн пек нормăсем тăвас (çĕр площадĕн пĕр гектарĕнчен литрпа):

Улатăр	11
Вăрнар	
Йĕпреç	
Калининский	
Куславкка	
Хĕрлĕ Чутай	
Сĕнтĕрвăрри	
Сĕнтĕр	
Шупашкар	
Шăмăршă	
Çĕмĕрле	
Етĕрне	
Ишлей	10
Канаш	
Комсомольский	
Кувакино	
Первомайский	
Пăрачкав	
Чкаловский	
Тăвай	
Элĕк	9
Октябрьский	
Советский	
Красноармейский	
Вăрмар	
Çĕрпӳ	
Шăхасан	
Елчĕк	

2. Çапла тăвас: государствăна сĕт тăратас тĕлĕшпе районсем валли тунă нормăсене 1941 çулта льгота йĕркипе шутласа хураççĕ: çак постановление çирĕплетнĕ нормăран 80 процент шутпе тăваççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Колхозри стахановла шкул

«Сталь» колхозри (Хĕрлĕ Чутай р.) стахановла шкул аван ĕçлет. Шкула Данилов юлташ ертсе пырать. Шкулта вĕренме правлени членĕсене, бригадирсене, звеновдосене, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксене тата ытти активистсене явăстарнă. Шкул хăйĕн ĕçне тытăннăранпа 8 заняти туса иртернĕ те ĕнтĕ.

Шкулта вĕренекенсем çуракине хатĕрленнĕ çĕрте практикăллă ĕçе те туса пыраççĕ. Бригадирсенчен Данил Спиридонов, Василий Васюков тата Андрей Анисимов аван ĕçлесе пынипе минеральнăй удобренисене 6 тонна кӳрсе килнĕ, 4 тонна кĕл пухнă, тислĕксене уя кăларса йĕркеллĕ купаласа хураççĕ, ялхуçалăх машинисенчен 16 плуг юсанă тата пĕтĕм транспорт инвентарĕсене юсас ĕç хĕрсе пырать.

Январĕн 16-мĕшĕнче пулса иртнĕ занятире ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕн колхозсен обществаллă çĕрĕсене салатса пĕтерес çурăн сыхламаллли мероприятисем çинчен йышăннă постановлението ăнлантарса панă. Стахановла шкула колхозри пуçламăш парторганизаци пулăшса пырать.

П. ЖИДКОВ.

Пуян резервсем

КАНАШ. ВКП(б) райкомĕ СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсемпе продовольстви туса кăларассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлението сӳтсе-явас ыйтупа хуçалăх организацисен руководителĕсен канашлăвне туса ирттерчĕ.

Канашлура районта тата хулара куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерме пуян резервсем пурри палăрчĕ. Вăрман хуçалăхĕ халĕ клепка, урапа хатĕрĕсем (тĕнĕлсем), çурт çине витмелли турпас, шăпăрсем тата ытти хăшпĕр таварсем туса кăларнă. Тĕрĕссипе илсен вăл çуна-урапа, йывăç кăмрăкĕ, пĕкĕсем тата хуçалăхра кирлĕ ытти таварсем те кăларма пултарать. Çавăн пекех райсовет исполкомĕн кирпĕч заводĕнче çĕнĕрен черепица, навесть тăвакан производствăсем, конфетсем тăвакан фабрикăра варени пĕçерекон производство тума май пур. Вĕсене йĕркеллĕ ĕçлеттерме чĕртаварсем вырăнтах çителĕклĕ.

Промысла коопераци артелĕсем те таварсем кăларассине чылай ӳстерме пултараççĕ. Сталин ячĕпе тăракан артель сĕтел-пукансем, «Авангард» артель атă-пушмаксем тăвассине тата юсассине ӳстерме пултарать. Кашни артельтех пысăк резервсем пур. Вĕсемпе туллин усă курсан куллен кирлĕ таварсене ытти районсенчен кӳрсе килессине нумай чакарма пулать. Çавна тумалла та.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановлението вырăнти промышленность предприятийĕсен коллективĕсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Халĕ пур предприятисемпе артельсенче те вырăнти резервсемпе усă курса, мĕнле производствăсем организацилесси çинчен сӳтеваççĕ. Чылай çĕрте вăл резервсене уçса палăртнă та ĕнтĕ. Çапла, сăмахран, «Швейник» артель январь уйăхĕнче планран ирттерсе 15 пин тенкĕллĕх çĕленĕ тумтирсем кăларма пулнă.

Канаш хулинче атă-пушмаксем, тумтирсем юсакан мастерскойсем çителĕксĕр, хуçалăхра кирлĕ япаласене юсакан мастерскойсем çук. Вырăнти промышленность предприятийĕсен, промысла коопераци артелĕсен таварсем кăларассине ӳстерме мероприятисем палăртнă чухне çавсем çине хытă çăвăрăнса пăхмалла. Пуян резервсене çеç мар, ĕççыннисен пур ыйтăвĕсене те шута илес пулать,—çакна тĕп вырăна хумалла куллен кирлĕ таварсем кăларассине ӳстерме палăртнă чухне.

Канашра хуçалăхра кирлĕ тимĕртен тунă таварсем кăларассине чылай ӳстерме пултараççĕ. Сталин ячĕпе тăракан артель сĕтел-пукансем, «Авангард» артель атă-пушмаксем тăвассине тата юсассине ӳстерме пултарать. Кашни артельтех пысăк резервсем пур. Вĕсемпе туллин усă курсан куллен кирлĕ таварсене ытти районсенчен кӳрсе килессине нумай чакарма пулать. Çавна тумалла та.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановлението вырăнти промышленность предприятийĕсен коллективĕсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Халĕ пур предприятисемпе артельсенче те вырăнти резервсемпе усă курса, мĕнле производствăсем организацилесси çинчен сӳтеваççĕ. Чылай çĕрте вăл резервсене уçса палăртнă та ĕнтĕ. Çапла, сăмахран, «Швейник» артель январь уйăхĕнче планран ирттерсе 15 пин тенкĕллĕх çĕленĕ тумтирсем кăларма пулнă.

Канаш хулинче атă-пушмаксем, тумтирсем юсакан мастерскойсем çителĕксĕр, хуçалăхра кирлĕ япаласене юсакан мастерскойсем çук. Вырăнти промышленность предприятийĕсен, промысла коопераци артелĕсен таварсем кăларассине ӳстерме мероприятисем палăртнă чухне çавсем çине хытă çăвăрăнса пăхмалла. Пуян резервсене çеç мар, ĕççыннисен пур ыйтăвĕсене те шута илес пулать,—çакна тĕп вырăна хумалла куллен кирлĕ таварсем кăларассине ӳстерме палăртнă чухне.

(Хамăр корр.).

Заготовкăсен планĕсене пĕр сăмахсăрах тултармалла

1941 çулти январĕн 1-мĕш тĕлне пирĕн республика махорка хатĕрлемелли плана 101,5 процент тултарнă. Апла пулсан та уйрăм районсем, сăмахран, Йăрачкав, Кувакино, Улатăр районĕсем плансене тултарайман. Çак районсенчи парти, совет организацийĕсем тата хатĕрлев органĕсем 1940 çулта махорка начар пулнă, çавăнпа хатĕрлев япăх пырать, теççĕ. Анчах иртнĕ çулта, 1939 çулпа танлаштарсан, махорка пысăк тухăçлă пулнă.

Махорка хатĕрлемелли плана тултарайманнин сăлтавĕ вăл—Главтабакăн Чăваш республикинчи контори тата унăн районсенчи органĕсем колхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене мĕнле тултарнине тĕрĕслесе тăманни, çак ĕçе конкретлăн ертсе пыманни.

Кашни районăн махорка хатĕрлемелли плана тултарма пысăк майсем пур. Кунта мĕнпурĕ те çине тăрса ĕçлени çеç кирлĕ.

Чăваш республикинче клевер, люцерна вăррисене хатĕрлес тата ссудăсене каялла тавăрса парас ĕçсем те япăх пыраççĕ. Клевер хатĕрлес плана 65 процент ытларах, ссудăсене каялла тавăрса парассине 88 процент ытларах çеç тултарнă. Люцерна тĕлĕшпе унтан та каярах. Элĕк, Куславкка тата Красноармейский районсем клевер вăрри хатĕрлес, çавăн пекех ссудăсене каялла тавăрса парас енĕпе ытла та начар ĕçлеççĕ.

Улатăрти махорка совхозĕ, Пăрачкаври вăрлăх совхозĕ тата Улатăрти, Вăрнарти вылăх апачĕн хуçалăхĕсем курăк вăррисем тăратма пачах тытăнман.

Вăхăта вăраха ямасăр, курăксен вăррисене хатĕрлемелли плансене тултармалла, ссудăсене пĕтĕмпех каялла тавăрса тăмалла.

Г. МАРТЬЯНОВ.

Майкопри „Красный Октябрь“ завода ăмăртăва чĕнтĕмĕр

Пирĕн заводри рабочисемпе инженерно-технически работниксен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕсенче заводăн 1940 çулти ĕçĕсем çинчен сӳтсеявăрĕç.

Калас пулать, иртнĕ çулта эпир нумай мар ĕçлерĕмĕр. Производство планне завод срокчен ытлашшипех тултарчĕ, таварăн хăйне ларакан хакне 5 процент йӳнетсе 876 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Завод коллективĕ татах та лайăхрах ĕçлеме пултарнă. Ун çинчен пухура тухса калана юлташсем кирлĕ пек сутаçса пачĕç. Акă, сăмахран, виççĕмĕш çул ĕнтĕ шыва химилле майсемпе тултатасси çинчен калаçаççĕ. Анчах ыйтăва Дубитель трест халĕ те татса паман. Çавăн пекех экономайзер та туса партман. Пуху çитес вăхăтра çак çитĕнлĕхсене пĕтерме завод директорне кирлĕ ĕçсем тума хушса хăварчĕ.

Çак пухурах партконференци умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарса пырас тĕлĕшпе Землячко ячĕпе тăракан тирăсран завод коллективĕ чĕнсе каланине сӳтсе-явăрĕç. Пуху пĕр сасăпах Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме тата çулталăк планне декабрĕн 20-мĕшне тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне планпа пăхнинчен 2 процент ытларах чакарма, ĕç тухăçлăхне планпа кăтартнинчен 3 процент ӳстерме, пур рабочисене те техминимум кружокĕсене явăстарма, чĕртавара, электроэнергине перекетлеме, планран ирттерсе 200.000 тенкĕлĕх накоплени тума обязательство илчĕ. Завод коллективĕ Майкопри «Красный Октябрь» экстракт заводне социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

Н. ИВАНИЦКИЙ.

Çĕмĕрлери «Большевик» заводри завком членĕ.

Тычина сăввисем

Хĕрлĕ Çар юрри

Эй, кала, кала, кала,
Класăн вăйĕ мар-тăк,
Мĕншĕн çавăн пек маттур
Вăл пулма пултарнă?

Патшасемпеле тронсем,
Тӳнĕр пурте харăс:
Хĕрлĕ Çар куçса пырать,
Пирĕн халăх çарĕ.

Эй, кала, кала, кала,
Йывăр-им, юлташăм —
Тасамарлăхран тухма,
Таса пурăнмашкăн?

Кил-çуртри кив йăласем,
Пурте хăвăрт пĕтĕр:
Çирĕпленнĕ пирĕн класс,
Пурте хут пĕлетпĕр!

Эй, кала, юлташ, кала,
Халĕ ăнланатăн:
Буржуази пирки эс
Мĕнле шухăшлатăн?

Пĕтĕр хăвăртрах, пансем!
Парти хушнĕ халĕ!
Ворошилов пирĕнпе,
Пирĕнпе пур халăх!

Эй, кала, юлташ, кала,
Эпĕ ыйтмăп урăх:
Кам çĕмĕрнĕ Колчака,
Ма пĕтнĕ Петлюра?

Пĕттĕр, пĕттĕр, пĕттĕрех
Буржуйсен кунçулĕ:
Пирĕн Хĕрлĕ Çар пырать
Малалла хĕрӳллĕн!

УСЛИ Васлейĕ куçарнă.

Халăхсем пыраççе

Персе кăларнă йĕтре пек,
Хĕвел тавра çĕр саврăнать.
Тĕллевсĕр уйăх—çут çамка
Ана монокăльпе сăнать.

Мĕн чухлĕ хĕвелрен, шывран
Хăракансем çак çĕр çинче?
Çĕр, çирĕп çамрăксем çурат,
Богатырьсем ту вĕсенчен!

Çынсем пыраççĕ ялавпа,
Каяççĕ ирĕк çулĕпе:
Ав юн хĕрлентерет çĕре,
Çĕр çемçелет çын ӳчĕпе...

Строя тăраççĕ ыттисем,
Çĕкленççĕ ирĕк ялавне —
Каяççĕ революцине илсе
Çĕн июльпе Октябрь патне.

Ирĕклĕхе савакан çын,
Çĕнĕ пурнăçлăн кĕрешĕ!
Богатырьсем çурат эс, çĕр,
Эс, тинĕс, нӳрĕ пар пире!

Персе кăларнă йĕтре пек,
Хĕвел тавра çĕр саврăнать.
Тĕллевсĕр уйăх—çут çамка
Ана монокăльпе сăнать.

Хăй сӳннĕ вăл яланлăхах
Çут тухăça васканнă чух—
Массăсенчен уйăрлакан
Нихăçан та ыр курас çук!

Çĕннишĕн тăнă çын, эс çун:
Республике аталантар!
Пар, тинĕс, нӳрĕ! Уçă чун!
Çĕр, геройсем ытларах пар!

УСЛИ Васлейĕ куçарнă.

Курсра 32 çын вĕренет

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Машинно-трактор-нăй станци çумĕнче трактористсен курсĕ организациленĕ. Унта 32 çын вĕренеççĕ, вĕсенчен 6-шĕ хĕрарăмсем

А. Косойкин.

ПАВЛО ТЫЧИНА

(Çуралнăранпа 50 çул тултарнă тĕле)

Павло Тычина ячĕ Украинăра çеç мар, Совет Союзĕнчи ытти халăхсене те паллă. Вăл пысăк ăсталăхпа çырнă сăвăсемпе поэмăсене пур чĕлхесем çине ту кусарассĕ. Вăл—Украинăн хальхи литературин чи пысăк представителĕ, вăл хăйĕн çĕнĕ формăллă тата çĕнĕ содержаниллĕ сăввисемпе Украинăна советла поэзине пуçарса янă.

Тычина творчествине вырăс тата Украина литературисен гениййĕсем Максим Горькийпе Михайло Коцюбинский пысăк хак панă. Алексей Максимович 1927 çулта Павло Тычина патне çапла çырнă:

«Чĕререн тавтăватăп сире, Павел Григорьевич, хăвăр ярса панă кĕнекешĕн, сирĕн хисеп манăн чĕрене хумхантарчĕ. Эпĕ сире такçанах пĕлетĕп. Çынсем çинчен тĕлĕнмелле ăста каласа кăтартма пĕлекен Коцюбинский сирĕн çинчен те пайтах тата ăшă кăмăлпа каласа кăтартнă. Вăл сирĕн сăвăсене те вуласа панă мана. Унăр пуçне «Сонетсем вырăнне» ятлă кĕнекене украинла вуланă...

Питех кăмăла каймарĕ мана Гатовăн сапаланчăк шухăшлă тата, ман шутпа, пит пĕлсех çырман умстатьи. Мĕн тăвас тен—«Хĕвел çинче те вараланчăкăсем пур та».

Сирĕн алла хытă чăмăртатăп, сире хаваслăх тата сывлăх сунатăп. Прозăпа çырма шухăшламастăр-и эсир? Эсир кунта та новатор пулас пек туйăнать мана.

Тепĕр хут—тавтапуç.

10/VII—27, Сорренто. **А. Пешков».**

Павло Тычина литературăна пырса кĕни декадентсемпе мистиксем тата символистсем хушшинче пысăк шав кăларнă. Çав капайчăк поэтсем, пурнăçран уйăрăлса Парнас тăвĕсем çинче тĕлĕрсе çӳрекенскерсем, халăх хушшинчен çĕнĕ поэзи тума пынă Тычинăна поэт вырăнне шутламан, унăн сăввисене пичетлемесĕр тарăхтарнă.

Тĕрлĕрен поэтсем, унăн халăх пурнăçĕпе тата кĕрешĕвĕпе çыхăннă поэзине хирĕçлесе, çамрăк поэта хĕсĕрлеме пуçланă вăхăтра писатель-демократ Михайло Коцюбинский Тычинăна хăйĕн хӳттине илнĕ.

Тычина Коцюбинскийпе чи малтан 1910 çулта Чернигов хулинче тĕл пулнă. Çамрăк поэт, живописпе те интересленекенскер, Десна шывĕ хĕррине çутçанталăк илемне ӳкерме тухса ларнă, Украина халăхĕн аслă писателĕ Михайло Коцюбинский ĕçлесе ывăннă хыççăн уçăлса çӳреме тухнă пулнă. Пысăк сисĕмлĕ писатель часах çамрăк талант ларнине асăрханă. Çавăн хыççăн вĕсем сывăх туссем пулса пурăнма пуçланă.

Поэт хăй Коцюбинскипе мĕнле паллашнине—«Пĕрремĕш паллашу» сăвăра, сывăх тусланса кайнине—«Иккĕмĕш тĕлпулура», Коцюбинский патĕнче иртернĕ литература вечерĕсене—«Коцюбинский патĕнче» ятлă сăвăра тата Максим Горькийпе Михайло Коцюбинскине унчухнехи студентсем мĕнле хисепленине—«Эпир Коцюбинский патне çыру мĕнле çырнă» ятлă пысăк сăвăра çырса кăтартнă.

Михайло Коцюбинский Павло Тычина çине мĕнле кăмăлпа пăхни унăн çырăвĕсенчен те лайăх курăнать. Вăл Тычина патне янă çырусенчен пĕринче Италири çутçанталăк илемне мухтаса çапла çырнă: «Вăт ăçта эсир картинăсем ӳкерме тата сăвăсем çырма пултараттăрччĕ». Тепĕр çырăвĕнче çакăн пек вырăн пур: «Мана сирĕн çырусене илме савăнăçлă, вĕсем эсир мана манманнине тата эпир пĕр-пĕрне хисепленине кăтартса параççĕ».

Павло Григорьевич хăй каланă тăрăх, Коцюбинский ăна илемлĕ литература принципне ăнланса илме пулăшнă, вăл унăн хаклă çын пулнă. Поэт халĕ ун çинчен çапла аса илет,

Ку ăнсăртран пулнă япала мар, вăл поэт хăй халăхран тухнинчен килет. Тычина чухăн хресчен çемьинче çуралнă. Мĕн пĕчĕкренех пурлă-çуклă пурнăç нушине тӳссе ӳснĕ, вăл хăй гимназире вĕреннĕ чухне те унта-кунта ĕçлесе çеç тăраннă.

Çамрăклах хăй тĕллĕн пурăнма пуçлани поэта пӳрнăçа тарăннăн ăнланса илме май панă. Ăçат редакцийĕнче тата Черниговри статистика управленийĕнче ĕçленĕ чухне Тычина служба ĕçĕсемпе час-часах ялсенче пулнă. Ун чухне вăл ялти хресченсемпе курнăçса халапланă, помещиксем хресченсене тискеррĕн эксплоатациленине тата хресченсен мĕскĕн пурнăçне хăйĕн куçĕсемпе курнă, ялтан яла çӳресе вăл халăх юмахĕсемпе юрри-сăввисене пухнă.

Çавăнтан пуçланнă Павло Тычина халăхпа тачă тăрса ĕçлесси, унăн кăмăл-шухăшĕсене палăртса юрласси. Анчах питĕ йывăр пулнă ăна хăйĕн халăх творчествипе сыхăннă сăввисене пичетлеме. Çапах та вăл çырма пăрахман, тăшмансене вăрçтара-вăрçтарах хăйĕн ĕçне малалла тунă.

Çапла 8 çул ĕçленĕ хыççăн, 1918 çулта унăн сăввисен «Солнечные кларнеты» ятлă пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухнă. Ку кĕнекере хăйĕн тăван халăхне, унăн ĕмĕртенпех пынă çапăçуллă паттăрлăхне тата Украина çĕршывĕн ытарайми илемне çырса кăтартнă, вăл пурнăçа чунтан юратса, хĕвеле, сутă куна тата революци шуçăмне мухтаса юрланă. Вăл хăйĕн 1916 çулта çырнă «Хирти топольсем» ятлă сăвинче тӳрех çапла калать:

Ман чунăмра çил-тăвăл,
Бандуристсен юрри-кĕвви.

Ку йĕркесенче Максим Горькийĕн «Тăвăл йыхравĕ» ятлă сăвви влияни пани палăрать. Аха мар ĕнтĕ поэт хăйĕн пĕр сăввинче «Эпир пурте Горькийпе Коцюбинский пек пулма ĕмĕтленетпĕр» тесе çырать.

Çамрăк Тычина империализм вăрçи вăхăтĕнче çав вăрçа хирĕç хаяр сăвăсем çырнă. Унăн пĕр сăввинче хресчен хĕрарăмĕ хăйĕн упăшкине вăрçа илсе кайнă çынсене: «Тĕп пулăр эсир хăвăрăн вăрçупа», тет.

Халăх творчествипе усă курса çырнă «Виçĕ çил çинчен шухăшлани» ятлă сăвăра лайăх пурнăçшăн кĕрешекен ĕçчен çыннăн сăнлăхне панă. Вăл хăйĕн пĕрремĕш кĕнекипех хăй революциллĕ художник-реалист пулнине кăтартнă.

«Плуг» кĕнекере Тычинăн революциллĕхĕ татах та вăйлăрах. Ку кĕнекере Тычина пĕтĕмпех революциллĕ поэт пулса çитни палăрать. «Революци çĕнĕ кун илемне илсе килчĕ», тет вăл. Унăн творчествин тематикинче революцине граждăн вăрçи тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. «Площадьре» «Укрĕ вăл лаша çинчен», «Ял хыçĕнче вĕлерчĕç» т. ыт. чылай сăвăсенче ĕççыннисем Совет власĕшĕн, çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешнине ăстан çырса кăтартнă.

Площадьре чиркӳ таврах,
Революци ĕç тăвать.
Пултăр атаман Чабан,—
Кăшкăрнă пурте пĕр тан.
—Сывă пултăр! Кĕтĕр ирĕк!
Кайрăмăр!—тесен, вĕсем
Лашасем çине утланнă,
Вĕлкĕштернĕ ялавсем.
Тăнă площадьре салхуллăн
Вĕсен ват амăшĕсем.
—Сутатсам çула эс, уйăх,—
Тесе çеç юлнă вĕсем.
(«Площадьре» сăвăран).

Октябрь революци пани ирĕклĕхшĕн халăхсем хаярăн çапăçнă çулсенче вырăссен кучухнехи писăк поэчĕ Владимир Маяковский писăк ĕç тунă: çивĕч эпиграммăсемпе фельетонсем çырса революци тăшманĕсене питленĕ. Тычина та çав вăхăтра интервентсене, Польша панĕсене, тĕрлĕрен атамансен бандисене тата вĕсем майлă шухăшлакансене питлесе сăвăсем нумăй çырнă: «Анра пророксене», «Аслă суеçĕсене» ы. ыт. те.

Çав сăвăсем граждăн вăрçи вăхăтĕнче пит пысăк усă панă, вĕсем ĕççыннисене хăйсен тăшманĕсене тĕплĕн ăнланса илме тата вĕсемпе кĕрешме пулăшнă. Вăл поэт-агитатор пулса ĕççыннисене:

Пăртак тăхтăр, юлташсем,
Пулĕ ак ĕçме-çимешкĕн:
Пулăшăр Совет власне
Тăшмана часрах çĕнмешкĕн, —
тенĕ.

Халăх хуçалăхне юсас тесен, чи малтан интервентсене çĕмĕрсе тăкма кирлине Тычина лайăх ăнланнă, унра ĕççыннин массисем хăйсен хастарлă поэтне курнă.

Çĕршыв кунçулĕпĕн пĕтĕм халăх вилес пек çапăçнă вăхăтра мистикăллă арчана кĕрсе ларнă поэтсене хирĕç те Тычина вăйлăн кĕрешнĕ.

«Украинăран вĕрекен çил» ятлă кĕнеке поэт тăван çĕршыва чĕререн юратнине тата çав вăхăтрах халăх тăшманĕсене пĕтĕм чунтан курайманнине кăтартса парать. Граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн, çĕршыв строительство ĕçне тытăннă, поэт та çĕнĕ пурнăç строительстви çинчен юрлать. Вăл пупсем чиркӳре «Христос чĕрĕлнĕ» тенине хирĕç: «Христос мар, рабочисен класĕ чĕрĕлнĕ, тытăннă ĕçе», тет.

Граждăн вăрçи вăхăтĕнчех поэт çĕре социализмăн çĕнĕ строителĕсене, ĕç паттăрĕсене çуратма чĕнет: «Çĕр, геройсем ытларах пар!» тет. Поэт ĕмĕтленнĕ çынсене çĕнĕ Украина çуратрĕ, вĕсем: Стаханов, Мария Демченко, Кривонос, Мазай, Ширшов т. ыт. те.

Павло Тычина—вăхăт тĕрĕслевĕ витĕр тухнă поэт. Унăн пур произведенийĕсенче те савăнăç хĕвелĕ çиçсе тăрать:

Эп заводран, ĕçрен тухсассăн,
Каяп манифестацине.
Паян çанталăк пит хаваслă,
Çиçет илемлĕ çуркунне.

Унăн произведенийĕсем тăрăх вăл хăш вăхăтра пурăнса ĕçленине курма пулать. Мĕншĕн тесен—вăл эпохăпа пĕр тан утса пырса, пур ĕççемпе событисем çинчен те хăйĕн илемлĕ те ăнтăмлĕ сăмахне калать, вăл пурин çинчен те илемлĕ сăвăсем çырма пултарать, унăн: ăçта пурăнăç — унта поэзи.

Литературăра пысăк ӳсĕмсем тунăшăн Тычинăна Совет правительстви Ленин орденĕпе наградланă. Павло Тычина, литературăллă творчествăсăр пуçне, академик та, Украина Верховный Совечĕн депутачĕ пулса та обществăллă ĕçсем тăвать, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Халăх хушнă ĕçе «Сталин хушнă пек тума сăмах панă» вăл, çавăн пек тăвать те. Сывлăх сунар ăна 50 çул тултарнă ятпа!

Вас. УСЛИ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Динамон» Серпуховри (Мускав облаçĕ) охота хуçалăхĕнче хĕллехи вăхăтра лоç вăкăрĕсене тытма пуçланă (ватă лоссене облава туса ятарласа тытма ирĕк панă). УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Мускаври автодорожнăй институт аспиранчĕ охотник В. Д. Чепурный персе амантнă лоç патне пырать.

Н. Алексеев фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

▲ ▲ ▲

Халăха вĕрентес ĕçри ертсе пыракан работниксен канашлăвĕ

Январĕн 27-мĕшĕнче Мускавра автономлă республикăсенчи Çутĕç Халăх Комиссарĕсен, халăха вĕрентес ĕçĕн крайсемпе облаçсенчи отделĕсен заведующийĕсен канашлăвĕ уçăлать. Канашлура çакăн пек ыйтусем тăраççĕ: РСФСР шкулĕсенчи кăçалхи вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çурçулĕнчи ĕçсен итогĕсем çинчен тата вĕренекенсене практикăлла хăнăхусем парасси çинчен.

РСФСР Наркомпрос шкулĕсен государство научно-исследовательский институчĕ практикăллă занятисем валли хатĕрленĕ пособисемпе оборудованисен выставкине уçнă. Выставкăра шкул çумĕнчи опытлă участокра алăпа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарĕсен комплекчĕсем пур. Инвентаре шкул çулне çитнĕ ачасене ĕçлеме юрăхлă туса хатĕрленĕ. Тĕрлĕрен приборсем, кăйĕне чиксе çӳремелли метеорологи станцийĕ т. ыттисем те пур. Ялхуçалăх инструменчĕсен чертежĕсен альбомĕсем пур.

Ачасене художествăллă воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлекен центральнăй çурт ача-пăча пултарулăхĕн выставкине хатĕрленĕ. (ТАСС).

Советсенчи çамрăк работниксене вĕрентеççĕ

ЛЬВОВ. Обласри пур районсенче те ялсовет председателĕсемпе секретарĕсем валли вунтăр кунлăх семинарсем организациленĕ. Совет ĕçĕнчи çамрăк работниксем «Ленин—Сталин государство çинчен вĕрентни» темăпа, совет законодательстви т. ыт. ыйтусем тăрăх лекцисем итлеççĕ. Вырăнти Советсен работникĕсем 500 çын ытла Львов хулинче организациленĕ пĕр уйăхлăх курс урлă вĕренсе тухаççĕ.

Скульптор-самоучка

МАХАЧ-КАЛА. Согратль аулĕн (Гунибский р.) площаднĕче В. И. Ленин памятникĕ тăрать. Вăл памятнике сăрт-тусем çинчи чулран çавтери пысăк мастерлăхпа тунă. Ана тăваканĕ—вырăнти колхозник-каменщик Магомед Муртазавиев. Халь вăл С. М. Киров скульптурине тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Революцин çулăмлă трибунĕн фигурине пĕр пысăк чула якатса тăвать.

Государство заемĕсен 1941 çулти пирвайхи тиражĕ

Кăçал пирвайхи тираж январĕн 18—19-мĕшĕнче пулать. Государствăн Икĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемăн тиражĕ Караганда хулинче пулса иртнĕ. Тиражра 1.300 пин выигрыш, пурĕ 209.920 пин тенкĕлĕх пулнă. Вăл шутра 200 выигрыш 3000-шер пин тенкĕ, 1000 выигрыш 1000-шер тенкĕ, 10.000 выигрыш 500-шер тенкĕ т. ыт. те.

Районри промышленность валли хатĕрлекен оборудовани

РСФСР Наркомместпромĕ хăйĕн механически заводĕсенчен чылаййăмĕсене районри промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем валли оборудованисем йышлăн кăларма хушнă.

Пенза хулинчи 2-мĕш номерлĕ заводăн çак çулта сверлильнăй станоксем 1.100 станок, Сызраньри заводăн—фуговольнăй тата фрезернăй станоксем 400, Кировский заводăн—эксцентриковăй прессем 60, Рыбинск хулинчи заводăн—лесопильнăй рамăсем 50 туса кăлармалла.

Механически заводсем ленточнăй тата маятниковăй пăчкăсене, токарнăй станоксене тата ыт. те серипе кăларма пуçласçĕ.

Районри промышленность валли çак çулта приспособленисемпе инструментсем—кузнечнăй мехсем, çăрауççисем, кистьсем йышлăн туса хатĕрлемелле. (ТАСС).

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ Германин хĕçпăаллă вăйăсен верховнăй командованийĕн çакăн пек сводкине парать:

«Çанталăк условийĕсем начар пулнă пулин те, Германин торпеднăй катерĕсем Ла-Манш районĕнче разведка ĕçне ăнăçлăн тунă. Çавăн чухне Германи катерĕсем противниклă темиçе хутчен те тĕл пулса çапăçнă. Катерсем пурте хăйсен базисене тĕрĕсех тавăрăннă. Çанталăк начар тăнипе Германи авиацийĕ январĕн 24-мĕшĕнче разведка кăна тунă.

Крит утравĕнчен хĕвеланăç енче, Вăтаçĕр тинĕсĕнче, Германи бомбардировщикĕсем противникăн суднăсен вăйлă конвойпа пыракан караванне атакăланă. Противникăн виçĕ пысăк судни çине пысăк тата вăтам калибрлă бомбăсем тĕл ӳкнине палăртнă. Противникăн пĕр самолетне персе ангарнă».

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ юлашки эрнере противник объекчĕсем çине вăйлăнах тапăнайман. Пиллĕк каç ĕнтĕ нименле операцисем те пулман. Противник авиацийĕ те Англи çине çине-çинех пырса тапăнман. Лондонра пиллĕк çĕр хушши сывлăшран тапăнни çинчен пĕр тревога та пулман. Çакă вăл иртнĕ çулти сентябрь уйăхĕнчен вара чи лăпкă каççем пулнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 24-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Сицилире итальянецсен авиабазисем çине çĕнĕрен пырса бомбăсем пăрахнă, вăл авиабазăсемпе Германин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем усă кураççĕ. Бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсене Мальта утравĕ çинченех курма пулнă.

Германирен Англин 16 крейсерне путарни çинчен пĕлтернĕ пирки Лондонри тинĕс-çар çыннисем: вăрçă пуçланнăран вара та Англин мĕнпурĕ те 4 крейсер тата хĕçпăалланнă вспомогательнăй суднăсем 11 судно пĕтнĕ, çавсене противник крейсерсемпе хутăштарать, тесе пĕлтереççĕ.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Греци командованийĕ январĕн 24-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: пĕчĕк операцисем ăнăçлăн вĕçленнĕ. Греци войскисем итальянецсене çĕр çынна яхăн тыткăна илнĕ. «Пройа» хаçат çапла çырать: ĕнер Тепелене районĕнче Грецине Итали патрулĕсем хушшинче çапăçусем пулса иртнĕ. Çыранри секторта противникăн укрепленийллĕ позицийĕсем çине артиллерирен персе тăраççĕ. Противник авиацийĕн активлăхĕ пысăках пулман.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Греци чаçĕсем Керавниа тăвĕсем урлă малалла кайнă, халĕ вĕсем Валона бухтинчен 2 миляра тăраççĕ. Грецине Англи самолечĕсем Дураццо çине хаярăн бомбăсем пырса пăрахнă. Гаване тата промышленноçлă предприятисене сиен кӳнĕ.

Юлашки виçĕ кун хушшинче центральнăй фронтăн тĕрлĕ секторĕсенче грексем 530 итальянеца тыткăна илнĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, центральнăй фронтра Итали чаçĕсем Клисура патĕнчен çурçĕр еннелле чакнă.

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕш . (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат çапла пĕлтерет: Керу ялĕ патĕнче (Эритрея) Англи войскисем Итали кавалерине поражени кӳнĕ. Керу ялне Англи войскисем турттса илни Итали коммуникацийĕсемшĕн пысăк хăрушлăх туса хума пултарать.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăрти участокра та Англи войскисем противнике Баренту еннелле хĕссе пыраççĕ. Кунта англичансем Айкота ялне турттса илнĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: январĕн 23-мĕшĕнче Англин çывăхри хĕвелтухăçĕнчи войскисен командующийĕ генерал Уэйвелл Тобрук районне пырса кайнă. Уэйвелл унта пынă вăхăтра хула çунма чарăнман.

Каннă хыççăн Англи войскисем палăртса хунă план тăрăх хĕвеланăç еннелле малалла кайма пуçласçĕ.

Агентство çапла кăтартса парать: хальхи вăхăтра Англи войскисем вăрçăра тыткăна лекнĕ çынсене Тобрукран Египет порчĕсене турттарса каяс тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Сиди-Барранине англичансем турттса илнĕренпе тыткăна лекнĕ 54 пин итальянеца Египет порчĕсене ăсатнă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Граццани хăйĕн штабне Сиренран урăх çĕре куçарса кайнă.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви Итали командованийĕн çакăн пек сводкине парать: «Ĕнер кăнтăрла, Италин юлашки чаçĕсем, Тобрукăн хĕвеланăç секторĕнче противника хирĕç хаярăн çапăçнă хыççăн, противнике парăннă. Тобрук крепоçĕнче пехотăн пĕр дивизийĕ, чикĕри хуралăн пĕр батальонĕ, чернорубашечниксен пĕр батальонĕ, çавăн пекех тата моряксен отрячĕсемпе артиллери чаçĕсем — пурĕ 20 пин çын пуллă. Çак вăйсем сывлăшран, тинĕсрен пĕрмаях бомбăсем пыра-пыра пăрахнă çĕрте 4 кун хушши пынă штурма чăтса тăнă. Пирĕн артиллери противнике хирĕç юлашки снаряд пĕтичченех персе тăнă, Австрали чаçĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн çухатусем те çавăн пекех пысăк. Противник радиостанцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, аманнă 2 пин итальяноца Тобрукран турттарса кайнă. Тобрук хыççăн çапăçусем хĕвел анăç еннелле куçнă, унта пирĕн авиаци пулăшнипе противникăн бронетанковăй чаçĕсен атакисене сирсе янă. Противникăн пĕр самолетне персе антарнă.

Греци фронтĕнче çанталăк условийĕсем начар пулнипе операцисене сарса яма чăрмантарнă. Пысăк мар çапăçусем вăхăтĕнче противникăн паха позицийĕсене турттса илнĕ, çавăн пекех тага чылай çынна тыткăна илнĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Судан фронтĕнче Керупа Айкота зонинче çапăçусем пынă.

Ĕнер Германин авиаци корпусĕн соединенийĕсем Вăтаçĕр тинĕсĕн центральнăй пайĕнче противник эскадрине атакăланă.

Атлантика океанĕнче Италин пĕр подводнăй лодки Грецин «Элени» ятлă пароходне путарнă.

Италин тепĕр подводнăй лодки, хаяр çапăçу пулса иртнĕ хыççăн, Англин «Омеус» ятлă крейсерне путарнă. Крейсер войскăсем турттарса пынă пулнă.

Румынири лару-тару

БУХАРЕСТ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Румынири телеграф агентстви генерал Антонеску каларнă коммюникене парать. Çак коммюникере Антонеску рабочисемпе служащисене пурне те ĕçе тытăнма хушать, ĕçе тытăнманнисене ĕçрен кăларса ярассипе хăратать. Вăл влаçсене пăлхавçăсем хирĕç тăракан центрсем çинчен пĕлтерме, вĕсене сийĕнчех путарса лартма хушать. Çуртсенчен перекен, çавăн пекех вăрă ĕçĕ тăвакан çынсене вырăнтах персе вĕлереççĕ.

БУХАРЕСТ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем полицин генеральнăй директийĕ кăларнă коммюникене пичетлеççĕ. Вăл коммюникере каланă тăрăх, Бухарестра йĕркелĕх туса хунă. Анчах та Бухарестри нумай районсене войскăсем хупăрласа тăраççĕ, вăл районсенче халăха çӳреме чарнă. Хулара пур çĕрте те каçхине 10 сехет иртнĕ хыççăн виçшер çынтан ытла пĕр çĕре пухăнма чарни çинчен кăларнă приказа çыпăçтарса тухнă. Каçхине 9 сехет тĕлне обществăллă предприятисем пурте ĕçлеме чарăнмалла.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Румынири хăшпĕр районсенчи, уйрăмăнах Брашов, Джурджу, Констанца, Плоешти, Кымпин тата Бухарестри лару-тăру

БУХАРЕСТ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Январĕн 21-мĕшпе 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ пăлхавсем вăхăтĕнче железногвардеецсем еврейсене хирĕç погромсем тунă. Ĕнер чылай журналистсем Бухарестра еврейсем пурăнакан районсенче пуллă. Вĕсем каласа панă тăрăх, унта пурнăç питех те хăрушла. Вакарешть, Дудешть тата ытти районсенче еврейсен магазинĕсене çĕршерĕн çĕмĕрсе тăкнă. Нумай магазинсене çунтарса янă. Темиçе синагога çунтарса янă. Еврейсенчен нумайĕшне хĕнесе пĕтернĕ. Еврейсем хушшинче вĕлернисем тата нимĕн хыпарçăр сухалнисем те пур.

Китай çарĕ хушшинчи конфликт

ЧУНЦИН, январĕн 25-мĕш. (ТАСС) Юлашки ĕнесем хушшинче Аньхуэй провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Китайри пĕтĕм общественноçа шухăшлаттаракан событисем пулса иртнĕ. Китайăн центральный правительствин пысăк çар соединенийĕсем генерал Гу Чжу-тун ертсе пынипе кĕтмен çĕртенех тăваттăмĕш çар чаçĕсене хупăрласа илнĕ, хаярăн çапăçнă хыççăн 4-мĕш çара хĕçпăаллантарнă. Çапăçура 4-мĕш çарăн 4.000 çын вилнĕ тата аманнă, 2.000 çын тыткăна лекнĕ. Хальхи вăхăтра 4-мĕш çара салатса янă, унăн командующине Е Тина арестленĕ.

Китайăн çар министрĕсен пĕлтернĕ тăрăх, Гу Чжу-тун войскисем 4-мĕш çара çак сăлтавпа хĕçпăаллантарнă тата салатса янă: çак çарăн командованийĕ национальнăй правительство вăл çара Хуанхэ юханшывĕн çурçĕр çыранĕ çине каçасси çинчен панă приказа пурнăçа кĕртмен пулать, тата вăл çар правительство войскисене хирĕç восстани пуçлама хăтланнă пулать.

4-мĕш çар представителĕсем çапла айăпласа каланине йышăнмаççĕ, вăл пĕрре те тĕрĕс мар, теççĕ. Вĕсем çапла пĕлтереççĕ: 4-мĕш çар çине тапăннин чăн-чăн сăлтавĕ вăл — гоминдан генералĕсен партиллĕ ансăр шухăшĕсем, вĕсем 4-мĕш çар речĕсенчи революциллĕ-патриотлă коммунистла элементсене хирĕç пыраççĕ.

Аньхуэй провинцийĕнче 4-мĕш çар çине тапăнни Китайри патриотла общественноçăн тĕрлĕ сийĕсем хушшинче, уйрăмăнах Китайри ĕççыннисен массисем хушшинче, пысăк тревога çарнă. Китайри малта пыракан çынсем хушшинче çапла шутлаççĕ: çак событисем вĕсем 4-мĕш çара кăна мар, тата 8-мĕш çара та пĕтерес тĕлĕшпе ирттерекен пысăк операцин пуçламăшĕ пулса тăрать, теççĕ. Вĕсем çапла каласçĕ: çакă вăл Китайра граждан вăрçи сарăлса каяссине пĕлтерет, вăл çĕршыва вăйсăрлатма кăна пултарать.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ÇУРÇĔР КИТАЙРА. Суйюань провинцинчи Китай партизанĕсен ĕçĕсем сарăлса пыраççĕ, вĕсем Бейпин—Суйюань чугунçулне пыра-пыра çĕмĕреççĕ. Японецсен тылĕсенче çавăн пекех Китайăн регулярнăй чаçĕсем те кĕрешеççĕ. Январĕн 15-мĕшпе 16-мĕш хушшинче çак чугунçул çинче поездсем çӳреймен Темиçе кун каярах Баотоу çывăхĕнче чугунçул линине татах тепĕр хут пырса çĕмĕрнĕ, çахна пула Японин çар поездне крушени пулнă.

ЦЕНТРАЛЬНАЙ КИТАЙРА. Январĕн 20-мĕшĕнче Китай самолечĕсем японецсен Ичан хули районĕнчи позицийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем тивнипе чылаях пысăк сиен пулнă.

Январĕн 25-мĕш. (ТАСС).

Англири компарти хаçатне кăларма чарнă

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: государствăна сыхласси çинчен кăларнă закон тăрăх правительство Англири коммунистла парти органне — «Дейли уоркер» хаçата кăларма чарнă.

ЛОНДОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Англири информаци министерстви Англири компарти органне — «Дейли уоркер» хаçата, çавăн пекех эрнере пĕрре тухакан «Уик» бюллетене кăларма чарни çинчен радио тăрăх пĕлтернĕ Шалти ĕçсемпе шалти хăрушсăлăх министерстви «Дейли уоркерпа»» «Уика» государствăна сыхласси çинчен калакан закон тăрăх хупни çинчен каласа, информаци министерстви çапла пĕлтерет: çӳлте кăтартнă изданисене хупасси çинчен кăларнă приказра çапла каланă: çав изданисене пичетлесе кăларакан е саракан çынсен ĕçĕсене, е унпа çыхăнса тăракан ĕçсене преступлени вырăнне шутлаççĕ, тенĕ. Çакă вăл, тенĕ малалла приказра, хупнă хаçатсен ĕçне малалла туса пыракан кирек мĕнле изданине те тивет.

Кăларма чарнă хаçатсен типографийĕсемпе малашне Верховнăй суд ирĕк панă хыççăн кăна усă курма юрать.

Халăх конвенчĕн участникĕсене хĕсĕрлеççĕ

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС) Январĕн 20-мĕшĕнче лейбористла парти исполкомĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Эттли, Герберт Моррисон, Гринвут тата Дальтон пулнă. Çак ларура халăх конвентне хутшăннă лейбористсем сине «дисциплинарнăй взысканисем хурасси çинчен» тăракан ыйтăва пăхса тухнă.

Исполком мĕнле те пулин татăклă решени йышăнайман пирки, çак ыйтăва тепĕр ларура пăхса тухма хăварнă.

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Лейбористла парти исполкомĕ Монмут графствинчи лейбористла организацин исполкомĕн членне Джонса партирен кăларнă, мĕншĕн тесен Джонс халăх конгресĕн воззванийĕ çине алă пуснă. Джонс çапла каланă: воззвание «ултă пункт пулнă, демократишĕн тăракан пĕр çын та вăл пунктсене хирĕç каласа пултарайман пулĕччĕ». Джонс —горноробочисен Кăнтăр Уэльсри федерацийĕн районри организаторĕ.

Албанири тата Африкăри вăрçă

(Январĕн 18-мĕшпе 25-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Албанири фронтра юлашки эрнере икĕ палла событи пулса иртрĕ—Греци войскисем Валонăна пырса кĕмелли вырăн патне çитсе тухни тата Итали войскисем пĕтĕм фрончĕпех вăйланса пыни.

Итали войскисем вăйлăн хирĕç тăнине пăхмасăрах Греци чаçĕсем Валона патнелле ерипен куççах пыраççĕ, Америка корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, вĕсем Валона хулине виçĕ енчен хупăрлама пуçланă та ĕнтĕ. Январĕн 25-мĕшĕнче Греци войскисем Валонăран мĕнпурĕ те 20 километрта кăна пулнă. Грексем Валона хулине туртса илсен, Итали войскисен положенийĕ чылаях йывăрланма пултарать, мĕншĕн тесен ун чухне вара итальянецсен пĕртен пĕр порт — Дураццо кăна тăрса юлать. Халĕ Италин 11-мĕш çарĕ Валона çине тата унăн 9-мĕш çарĕ Дураццо çине шанса тăраççĕ.

Фронтăн кăнтăр участокĕнче Греци войскисене малалла кайса пыма чарса лартас тесе, Итали войскисем, танксемпе авиаци пулăшнипе, пит вăйлă контратакăсем тăваççĕ, контратакăсем тунă чухне пĕр-пĕринпе тытăçса çапăçасси те час-часах пулать.

Тепелене тата Клисураран çурçĕр енчи районра та хаяр çапăçусем пыраççĕ, вăл çапăçусенчен пĕрре грексем, тепре итальянецсем çĕнтереççĕ. Фронтăн ытти участокĕсенче иртнĕ эрнере положени улшăнман.

Ютçĕршывсен корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Албание Италин çĕнĕрен 18 дивизийĕ пырса çитнĕ. Унччен малтан Италин чаçĕн-чаçĕн пырса çитнĕ подкрепленийĕсене, фронтăн тĕрлĕрен участокĕсенчи положение лайăхлатма, сăпăçăва тĕрлĕ вăхăтра хутшăнтарнă: çавна пула Итали командованийĕ маневр валли хăйĕн аллинче войскăсен вăйлă группине пухса тăратма пултарайман.

Албанире Итали войскисем чылаях вăйланнă май çитес пĕр е икĕ эрне хушшинче çак фронтра, сăмахран, фронтăн кăнтăр участокĕсенче, пысăк операцисем сарăлса каяссине кĕтме пулать. Греци командованийĕ туртса илнĕ позицисене çирĕплетес тĕлĕшпе мĕрăсем йышăнма пуçланă.

* * *

Ливире Англи войскисем, авиаципе тата тинĕс-çар флочĕпе пĕрле, Тобрука атакăланă, Тобрука Италин 22-мĕш армейский корпусĕ тата вакă чаçсем темиçе часть хӳтлесе тăнă. Атака тунă çĕре Австралин виçĕ дивизийĕ хутшăннă, вĕсемпе пĕрле артиллерин икĕ полкĕ, бронетанковăй дивизисем иккĕ тата Франçин де Голь генерал енчи механизированнăй чаçĕсен соединенийĕ пулнă. Тобрука атакăличчен ун çине Англин тинĕс-çар флочĕ вăйлăн персе тăнă. Атака январĕн 21-мĕшĕнче тул çутăлсан пуçланнă та пĕр кун кунĕпех пынă. Атака тунă чухне авиаци вăйлăн пулăшнă. Каçалапа Австрали чаçĕсем хулан хĕвелтухăç енчи укрепленисем туса çирĕплетнĕ пайне кĕме пуçланă. Тепĕр кунне Тобрука илес тĕлĕшпе мĕн кăнтăрла çитичченех хаяр çапăçу пынă. Январĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Австрали войскисем хулана илнĕ. Англи войскисем Тобрукран хĕвеланăç енче халĕ те çаплах наступленине тăваççĕ.

Англин Ливири войскисене тинĕс-çар флочĕ вăйлăн пулăшать. Вăл итальянецсен позицийĕсем çине персе тăнипе пĕрлех тата Англин малти чаçĕсене боеприпассем, çимĕçсене тăратать, вăл боеприпассемпе çимĕçсене тӳрех пароходсемпе Ливине илсе пыраççĕ.

Немĕçсем Сицилия утравĕ çинче хăйсен авиаци базине организациленĕ май Ливири вăрçă хальхи вăхăтра Англишĕн калама çук пысăк вырăнта тăрать.

* * *

Хĕвелтухăç Африкăра та вăрçă ĕçĕсем активлăн пулса пыраççĕ. Кунта уйрăмăнах англичансем Кассалăна илнине тата вĕсем малалла, Агордат—Асмара—Массауа еннелле кайса пынине палăртмалла.

Пуринпĕн те паллă, Кассала Эритрейăран Англи-Египет Суданне пырса кĕмелли тата унтан каялла тухмалли вырăн пулса тăрать.

Капитан Н. АНДРЕЕВ.

Итали Германи авиацийĕн Вăтаçĕр тинĕсĕнчи ĕçĕсем

РИМ, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви çапла пĕлтерет: Крит утравĕн районĕнче Германи авиацийĕн корпусĕпе Итали авиацийĕн соединенийĕсем Англи эскадри çине пырса тапăннă, эскадра çине нумай бомбăсем пăрахнă. Пысăк калибрлă бомбăсем тивнипе противникăн икĕ линкорĕпе пĕр крейсерне сиен кӳнĕ.

Хайле Селассие Абиссинине пынă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Абиссинири корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Абиссини негусĕ Хайле Селассие Англин çар самолечĕ çине ларса Хартумран вĕçсе тухнă. Негуспа пĕрле Англи офицерĕ тата Абиссини ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Расса Касса пулнă. Самолет Абиссини территорийĕнче секретлă аэродром çине анса ларнă.

Негус, тет корреспондент, çĕршывăн шалти районĕсене кĕрсе кайнă, вăл Англин çар миссийĕпе тата Англин Абиссинири регулярнăй чаçĕсемпе пĕрлешешĕн.

Япони парламенчĕн сессийĕ тавра

ТОКИО, январĕн 24-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çарпа тинĕс министерствисемпе финанс министерстви хушшинче пулса иртнĕ каласусем хыççăн, кăçалхи бюджет çулĕнче вăрçă нушисем тĕлĕпше тумалли расходсен суммине пĕр миллиард иена чухлĕ ӳстерме килĕшсе татăлнă. Вăрçă расхочĕсем валли хушса панă çак суммăна паян правительство çирĕплетет. Çапла вара кăçалхи бюджет çулĕнче вăрçă валли 5.460 миллион иена чухлĕ расход тăваççĕ.

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

▲ США тинĕс министрĕ хаçатсен представителĕсемпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ: Америка Англине панă 50 эсминец Англине чиперех çитнĕ, пĕр эсминецне кăна çул çинче сиен кӳнĕ, тесе шутлаççĕ.

▲ «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Франци банкĕ Германин оккупациллĕ çарне тытса тăмалли укçатенкĕ фончĕсене 85 миллиард франка çити ӳстернĕ.

Комсомолецсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ умĕн

ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕ комсомолецсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне мĕнле хатĕрленсе çитнине тĕрĕслес майпа январĕн 25-мĕшĕнче йĕлтĕрлĕ тата çурран походсем ирттерчĕ.

Йĕлтĕрçĕсен команди 10 километр хушшинне кайса килчĕ. Поход каçхине 9 сехетпе 11 сехет хушшинче пулса иртрĕ. Йĕлтĕрçĕсем çĕрлехи похода ăнăçлăн вĕçлерĕç.

Похода кайса килнĕ хыççăн ВКП(б) хула комитечĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Г. Алексеев юлташ йĕлтĕрçĕсемпе каласу ирттерчĕ.

Поход ăнăçлăн иртнĕ пулин те унта хăшпĕр организацисенчен комсомолецсем сахал пулчĕç. Комсомолăн пуçламăш организацисен походра пулман комсомолецсем çинчен çак кунсенчех сӳтсе-явмалла. Ăмăртăва хатĕрленес ĕçре татăклă улшăну туни кирлĕ, ку ĕçе комсомолецсене ытларах явăçтармалла.

Колхоз председателĕсен курсĕ

ÇĔРПУ, январĕн 27-мĕш. (Хамăр корр.). Ĕнер кунта, ялхуçалăх техникумĕнче, колхоз председателĕсен курсĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Курса Çĕрпӳ тата Шăхасан районĕнчен 123 çын пухăннă. Лекцисене ялхуçалăх техникумĕнчи преподавательсемпе вырăнти çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен специалистсем вуласçĕ.

Курс 7 куна пырать. Çак вăхăт хушшинче колхоз председателĕсем çĕрĕç, выльăх-чĕрлĕхсене пăхса ӳстересси, тĕштыра акса пăхса ӳстересси çинчен тата ыттисене вĕренеççĕ.

Курсра вĕренекен председательсене республикăра малта пыракан колхозсен ĕçĕсемпе тĕплĕн паллаштарма палăртнă. Преподавательсем Мартыновпа Грачев юлташсем курс ĕçлеме пуçланиччен Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоза кайса унăн ĕçĕпе тĕплĕн паллашнă. Халь вĕсем хăйсен лекцисене Сталин ячĕпе тăракан колхозăн паха опычĕсемпе çыхăнтарса ирттереççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

Ответлă редактор
Р. О. МАЛЮТИН.

Управление Землеустройства Наркомзема Чувашской АССР
ПРОИЗВОДИТ
НАБОР СЛУШАТЕЛЕЙ
НА 8 МЕСЯЧНЫЕ КУРСЫ ПРИ МАРПОСАДСКОМ ТЕХНИКУМЕ ЗЕМЛЕУСТРОЙСТВА.
Курсы готовят техников-с'емщиков для землеустроительных работ.

На курсы принимаются лица, имеющие образование не ниже семи лет.

Лица, желающие поступить на курсы, должны подавать заявление в Управление Землеустройства с приложением следующих документов: 1) Справку об образовании, 2) справку о рождении, 3) справку о состоянии здоровья, 4) две фотокарточки размером 3х4, 5) документ об отношении к воинской обязанности представляется лично.

Заявления принимаются до 1 февраля с. г.

Начало занятий на курсах 1 февраля с. г.

Принятым на курсы будет сообщено особым извещением.

Адрес для подачи заявлений: г. Чебоксары, Чувашская АССР, ул. Карла Маркса, д. № 7, Управление Землеустройства НКЗ ЧАССР.

Управление Землеустройства.

2—1

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çыру-семпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2249.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.